Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 6 ЕРНЕКУН

102 (4915) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Суйлавçăсен спискисене тĕплĕн тумала

Суйлав кампанийĕ пур çĕрте те анлăн сарăлса пырать. Хапрăк-саватсенчи, колхозсемпе совхозсенчи, шкулсемпе учрежденисенчи пумай çынлă митингсемпе пухусем совет халăхĕн патриотисăмне, вăл хăйĕн тăван çĕршывне чĕререн йуратнине кăтартакан хăватлă демонстрацисем пулса тăчĕç.

Рабочисемпе колхозниксем, совет интеллигенцийĕ хăйсен пухăвĕсенче йышăннă резољуцисенче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕнче коммунисемпе партире тăманнисен блокĕ чаплă çĕнтерӳ тăвасси çинчен калаççĕ. Партире тăман ĕççыннисем пулас суйлавсенче те коммунисемпе блок туса РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, хамăрăн хăватлă социалисăмлă çĕршывăн ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен партири тата партире тăман бољшевиксене суйлама пулса, коммунисен партипе халăхсен çулпуçне—аслă Сталин йулташа сăмах параççĕ.

Пирĕн суйлавсем хамăрăн тăван çĕршывра социалисăм татăклăнах çĕнтернĕ никĕс çинче, партире тăманнисем бољшевиксен партипе пĕрле пынă никĕс çинче историлĕ çĕнтерӳсем тунипе иртеççĕ. Анчах та, ĕççыннисем активлă пулни, вĕсем Ленин—Сталин партийĕпе пĕрле пыни—çаксем çеç пĕтĕм суйлав ăнăçулăхне татса параççĕ тени, çав майпа суйлав кампанийĕн организацилĕ тата техникла ĕçсене хак памании пысăк йăнăш пулать. Çакна ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлав кампанийĕ те лайăх кăтартса пачĕ. Суйлав комиççийĕсем тăвасси çине, суйлавçăсен спискисене хатĕрлесси çине çийелтен пăхнă çĕрте иртнĕ суйлав кампанийĕнче чылай çитменлĕхсем пулчĕç. Çак ĕçсем çине партипе совет организацийĕсем тимлĕн пăхманнипе халăхăн тата партин усал тăшманĕсем, хăйсен кирек çĕр ĕçĕсене тума усă курнă. Çакăнтан пирĕн партипе совет организацийĕсен хăйсене ваљљи тивĕçлĕ выводсем тумала.

Халĕ ĕнтĕ, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççисене туса пĕтернĕ, вĕсем хăйсен ĕçĕсене тума тытăнчĕç. Участкăсенчи суйлав комиççийĕсем те ĕçлеме тытăнаççĕ.

Çаксемпех суйлав кампанийĕн ĕçсем пĕтмеççĕ. Суйлав кампанийĕн организацилĕ пысăк ĕç вăл **суйлавçăсен спискисене хатĕрлесси пулать**. Çак ответлă та пысăк ĕçе хула тата йалсовечĕсем суйлав участкисем тăрăх тăваççĕ. Советсен, суйлав комиççийĕсен задачи—**суйлавçăсене пĕр çын хăвармисăр спискăсене кĕртесси пулать**. Пĕр суйлавçă та хăйне РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсем паракан аслă правана—влаçăн органĕсене суйлас правана усă курмасăр ан йултăр. Иртнĕ суйлав кампанисенче суйлавçăсене списка кĕртменнисем, суйлавçăсен йачĕсене, хушамачĕсене, ашшĕ йачĕсене пăсса пĕтернисем сахал мар пулнă. Кунсăр пуçне тата хăшпĕр хулапа йалсовечĕсенче суйлавçăсен спискисене пĕтĕм халăх курмали вырăнсене вăхăтра кăларса çакман, спискăпа суйлавçăсене паллашма май туса паман.

Суйлавçăсен спискисене çырасси çине пĕчĕк ĕç çине пăхнă пек пăхма йурамасть. Суйлавçă суйлава хутшăнасси ăна спискăна кĕртнинчен, унăн йатне, ашшĕ йатне, хушаматне, хăш çулта çуралнине, ăçта пурăннине тĕрĕс çырнинчен килет. Çакă вăл суйлава ăнăçулă иртерме кирлĕ условисенчен пĕри пулать.

Советсен суйлав кунĕ пуличчен 30 кунран кайа йулмасăр суйлавçăсен спискисене пĕтĕм халăх пăхса тухмалли вырăнпа çакмала, йе суйлавçăсене çак спискăсемпе паллашма май туса памала. Спискăсенчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă зайавленисене вăхăтра пăхса тухассине суйлавçă хăй пурăнакан вырăна улăштарсан ăна „сасăлама права паракан удостоверени" парас ĕççене те суйлав саккунĕ тăрăх йĕркелемеле. Иртнĕ суйлавра Шупашкартан тухса кайакан суйлавçăсем „сасăлама права паракан удостоверенисене" илеймесĕр хула советне икшер кун çӳренисем пулнă. Çитес суйлавра çакнашкал йапăх ĕççене пĕр суйлав участкинче те, пĕр йалсоветĕнче те, хула советĕнче те тумала мар.

Суйлавçăсен спискисене тăвас ĕç вырăнсенче кирлĕ пек пулса пымасть. Чылайĕш райĕçтăвкомсем хăйсен районĕсенче миçе суйлавçă пуррине, вĕсене ваљљи суйлав документĕсем мĕн чухлĕ кирлине халĕ те тĕплĕн пĕлмеççĕ. Сăмахран, Турхан тата Кувакинă райĕçтăвкомĕсем ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççине суйлав документĕсене ыйтса кашни хутрах ăрасна сведĕнисем параççĕ. Малтан, суйлав документĕсем илнĕ чухне, суйлавçăсен шутне пĕр цифрпе пĕлтереççĕ, тепĕр икĕ виç кун иртсенех, урăх цифрпа пĕлтереççĕ. Паллах ĕнтĕ суйлавçăсен шутне тĕплĕн пĕлмен çĕрте спискăсене çырасси чăтма çук начар тăрать. Кунашкал районсемпе советсем республикăра сахал мар халĕ. Парттипе совет организацийĕсен суйлавçăсен спискисене тăвас ĕçе халех, пайан-ыранах йĕркелесе йамала.

Спискăсене тĕплĕн те тĕрĕссĕн çырни суйлав техникине çăмăллатать. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем пĕр кун — ийунĕн 26-че пулса иртеççĕ. Суйлавçă суйлав çуртне пырсан паспăрт, йе колхоз кĕнеки, йе хăй камне пĕлтерекен ытти документа кăтартать. Çак документсем суйлав спискисемпе пĕр пек пулмала. Спискăпа документ хушшинче уйрăмлăхсем пулсан, вăл суйлава ирттерме кансĕрлет. Çавăнпа та суйлав комиççисен суйлавçăсен спискисене пĕрре çеç мар, икшер-виçшер хут тĕрĕслесе тухмала, йăнăшсене тӳрлетмеле.

Суйлав кампанин организацилĕ-техникăлă ĕçĕсене хак памании пулмала мар. Çак ĕçсене советсемпе суйлав комиççисен çеç мар, пурин те тĕплĕн пĕлсе тăмала. Агитатăрсен халăха РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсене ăнлантарнипе пĕрлех суйлав техникине те ăнлантарса памала. Кашни суйлавçă „сасăлама права паракан удостоверенине" мĕнле илесси çинчен, спискăри тĕрĕсмарлăхсем çинчен ăçта тата мĕнле йĕркепе зайавлени памали çинчен, мĕнле сасăламалли çинчен тĕплĕн пĕлсе тăтăр. Çак ăнлантарулă ĕçе парти, комсомол, профсойуз организацийĕсен туса иртермеле, вĕсен хăйсем уйăрнă агитатăрсене çак ĕçе тума хутшăнтармала.

Суйлавçăсене суйлава çĕр процентĕпе хутшăнтарасси политикăла пысăк задач. Çак задачăна ăнăçулă пурнăçа кĕртесси суйлав кампанине пур йенчен те бољшевикла организациленинчен килет. Суйлав кампанийĕн организацилĕ-техникăлă ĕç унăн политикăла задачипе пĕр виçере пулмала!

Грузири Коммунисла (бољшевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ суйлавçăсене чĕнсе калани

1938 çулхи ийунĕн 12-мĕшĕнче Грузи ССР Верховнăй Советне суйлас май, Грузири Коммунисла (бољшевиксен) Парти Тĕп Комитечĕ мĕнпур суйлавçăсем патне чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă.

Чĕнсе каланинче çапла каланă:

— Рабочисен, хресченсен, интеллигентсен йышлă пухăвĕсем пысăк хастарлăхпа иртеççĕ, вĕсем Грузи ССР Верховнăй Советне суйламали депутатсен кандидачĕсене палăртаççĕ. Грузи ĕççыннисем хăйсен чи лирвайхи кандидатне — ССР Сойузĕнчи социалисăм çĕнтерĕвĕсене организацилекене тата чĕрĕ вăй парса хавхалантаракана, телейлĕ, савăнăçлă пурнăç туса паракана — аслă Сталина палăртрĕç.

Советлă Грузи вăйлă социалисăмлă промышлĕнăçлă тата малта пыракан йалхуçалăхлă, чечеклесе пыракан республикă пулса тăрать.

Грузи — талкăштех хут пĕлекен тата малта пыракан куљтурлă çĕршыв.

Ирĕклĕ грузин халăхĕ ССР Сойузĕнчи халăхсен сталина туслăхне вĕсне çитийех парăннă. Советлă Грузи Совет Сойузĕн уйăрăлми пайĕ пулса тăрать. Аслă Сталин тавра таччăн пĕтĕçнĕ, совет патриотисăмĕн шухăшĕпе тулнă Грузи ĕççыннисем, пирĕн аслă тăван çĕршывăн никам тĕкĕнми чиккисем çине алă çĕклеме хăйакан кирек мĕнле урнă тăшмана та çапса çĕмĕрме хатĕр.

Йулашкинчен Грузи К(б)П Тĕпкомĕ суйлавçăсене чĕнсе каланинче çапла çырать:

— ПСК(б)П Сталинла Тĕп Комитечĕ тата аслă Сталин йертсе пыракан Грузири Коммунисла (бољшевиксен) Партийĕ хăйĕн пĕтĕм историйĕ тăршшĕнче, вăл Ленинăн — Сталинăн аслă идейисене пурнăçа кĕртессишĕн чĕререн парăнса кĕрешнине, вăл вĕсне çитийех халăхăн ĕçне сыхлама пултарнине кăтартрĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Грузири Коммунисла (бољшевиксен) Партийĕ Грузи ССР Верховнăй Совечĕн çитес суйлавĕсенче Грузи халăхĕ хăйне шанĕ тесе шутлама, суйлавçăсем пурте коммунисемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн пĕр кăмăллă пулса сасăлĕç тесе шанма пултарать.

(ТАСС).

Ӳкерчĕк çинче: В. И. Ленин, И. В. Сталин тата В. М. Молотов „Правда" хаçат редакцинче (1917 ç.). П. Васильев художник ӳкерчĕкĕ. (Центрти В. И. Ленин музейĕ).

(Сойузфото).

Пољарниксен тăванĕсем—Сталин йулташа

Мухтавлă љотчиксем—Алексеев, Головин, Орлов „Садко", „Седов" тата „Малыгин" пăрçĕмĕренсем çинчен илсе килнĕ пољарниксен арăмĕсем, амăшĕсем тата тăванĕсем Сталин йулташ йачĕпе йанă çырура çапла çыраççĕ:

„Есĕр, хаклă Иосиф Виссарионăвич, йаланхи пекех, пирĕн упăшкамăрсемпе ывăлăмăрсем çинчен чи малтан шухăшлаканĕ пулнă, вĕсен арăмĕсемпе ачисемшĕн пысăккăн тăрăшаканĕ пулнă. Епĕр Сирĕн умра тӳлесе татма май çук парăмлă, çакăн çинчен епĕр пĕтĕм пурнăç тăршшĕпех асăнса пурăнăпăр тата Сире йаланах тав тăвăпăр.

Сире, хаклă Иосиф Виссарионăвич, ырă сывлăх тата лайăх пурнăç сунатпăр".

(ТАСС).

Уралта нефт тухакан çĕнĕ район тупнă

Иртнĕ çулта „Прикамнефть" тресчĕ Перм хулинчен хĕвеланăçнерех нефт шырама пуçланă. Кунта нефт тухакан çĕнĕ район шыраса тупса палăртнă, вăл— Северо-Камский район, Пермрен 30 километрта тата Краснокамскри нефт промыслинчен 20 километр çурçĕрере.

1937 çулăн вĕçĕнче тунă скважинăпа хаљ 1.029 метр тарăнĕш шăтарнă ĕнтĕ, унтан çак кунсенче пысăк пахалăхлă таса нефт тухнă.

Çак районта татах темиçе скважинă тăваççĕ.

(ТАСС).

Сывлăшри пушар команди

Вăрман промышлĕнăç Халăх Комиссариачĕн авиацийĕ çезона вирлĕн хатĕрленет. Кăçал вăл 50 мĕлйун гектара йахăн вăрмана сывлăшран сыхласа тăмала тăвать. Патруљ самољочĕсен хисепне ӳстернĕ.

Хаљччен, вăрман çуннине курсан, љотчиксем вымпĕлсем пăрахса ун çинчен сывăхри йалсемпе хуласене пĕлтернĕ. Иртнĕ çулта патруљ самољочĕсем пĕрремĕш опытпа усă курнă. Вут хыпса илнĕ пысăк мар вăрман участкисене çăлса хăварма, вĕсем огнетушител илнĕ пушарниксене парашӳтсемпе антарма пуçланă. Пушарсем пысăк пулсан, парашӳтис халăха хăвăрт пуçтарнă та пушар сӳнтерекен организатăр пулса тăнă. Çак опыт пит паха пулни курăннă. 30 парашӳтисран тăракан командă 92 вăрман пушарне чарса лартнă.

(ТАСС).

Йулашки хыпарсем

Испани правителствин зайавленийĕ

Испани правителстви деклараци пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Испани республикĕ фашисла пăлхавçăсемпе интервентсене хирĕç вăрçакан вăрçă Испани территорине сыхласа хăварас, Испани никама пăхăнмасăр пурăнас тата Испани территорине Италипе Германи интервенчĕсенчен тасатас тĕллевпе пырать. Вăрçă пĕтнĕ хыççăн, — тесе кăтартса парать правителствă, — плебисцит пулса иртет, вăл республикăн йуридически структурине татса парать.

Государствă, — тенĕ малала зайавленире, — коллективлă харпăрлăха пур майпа та хаклать, халăхăн економикипе куљтурине ӳстерет. Вăл пуйанлăх пухăннипе граждансене експлоатацилесси патне илсе пырассине хирĕç кĕрешет.

Испани лăпкă пурнăçа сыхлас тĕлĕшпе пуçланă политикăна ăнăçлă пурнăça кĕртес тесе, хăйĕн мĕн пур оборонă хатĕрĕсене сарса вăйлатать.

(ТАСС).

Испани правителствин декларацине ырлаççĕ

БАРСЕЛОНА, майăн 3-мĕш. (ТАСС). Испани пичечĕ правителствă декларацине тулли кăмăлпа ырласа çырать. Компартин „Фронте рохо" йатлă хаçачĕ хăйĕн умстатйинче çапла çырать: Деклараци пĕтĕмĕшпех конституци çинче никĕсленет тата демократилĕ республикăн чăн-чăн программи пулса тăрать. Испани правителствă декларацинче кăтартнă тĕллевсемпе çеç вăрçать.

„Венгуардия" йатлă хаçат—министрсен Совечĕн председателне çывăх тăракан хаçат — çапла çырать: правителствă декларацийĕ нумай çул хушши пымалли документ пулса тăрать. Хаçат çапла шутлать: вăл документ Испани тăшманĕсем спекуљаци тăвакан тĕрлĕрен йăнăш ăнлантаракансене тĕп тăвать.

Майăн пĕрремĕшĕнче Пољшăра çапăçусем пулнă

Пољшă пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Майăн пĕрремĕшĕнче Пољшăн чылай хулисенче демонстрацине тухнă рабочисемпе фашиссем хушшинче пысăк тытăçусемех пулса иртнĕ. Çавăн пек тытăçусем хыççăн Љвовра 44 çын аманнă, вăл шутран 8 çын йывăрăн аманнă.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Китай авиацин паха çĕнтерĕвĕ

Апрелĕн 29-мĕшĕнче Хањкоу районĕнче сывлăшра хайар çапăçу пулса иртнĕ. Китай љотчикĕсем Йапонецсен çапăçура пулнă 38 самољотĕнчен 21 самољота персе ӳкернĕ. Йапонецсен 39 љотчикне вĕлернĕ, иккĕшне тыткăна илнĕ.

Китай авиацийĕн пиллĕк самољот пĕтнĕ. Љотчиксем парашӳтпа çăлăннă. Китайецсен пĕр истребителне вуншар пуљăсемпе шăтарса пĕтернĕ хыççăн, вăл сывлăшрах çунма пуçланă. Çапла пулнă пулин те, љотчик аманнă самољота аеродрома пит аван антарса лартнă.

(ТАСС).

Китайра партизансен йухăмне организацилени

Китай правителствин пуçлăхĕ тата çарсен главнокомандуйушчийĕ Чан Кай-ши партизансен йухăмне сарас пирки чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Чан Кай-ши пĕтĕм Китай халăхне Йапони захватчикĕсемпе кĕрешме чĕнет. Вăл, уйес руководителĕсене халăхсенчен партизан отрйачĕсене организацилеме ирĕк парать. Çак отрйадсем çартан кулленех пулăшу илсе тăма пултараççĕ.

Чан Кай-ши чĕнсе каланине Китайра пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ, мĕншĕн тесен нумай районсенче хăйсем тĕллĕн пулса пыракан партизансен йухăмĕ час-часах çар йенчен кирлĕ пулăшу илеймен. Нумай йышлă отрйадсем, вĕсене халăх пулăшать пулин те, хĕçпăшалсем çук пирки, час-часах вĕсем кĕрешĕве активлăн хутшăнма пултараймаççĕ. Чан Кай-ши чĕнсе калани, паллах, пур çĕрте те партизанла вăрçа сарса йама пулăшать.

(ТАСС).

Майăн пĕрремĕшне йут çĕршывсенче уйавлани

ПРАГА, майăн 3-мĕш. Майăн пĕрремĕшне пĕтĕм Чехословакинче фашисăма хирĕçле хăватлă демонстрацисемпе паллă тунă.

Кăçалхи çул Майăн пĕрремĕшне уйавласа иртерни Судет нимĕçĕсен облăçĕнче фашисăма хирĕç демонстрацисем ăнăçлă пулнипе уйрăмăнах палăрса тăрать. Коммунисла парти нимĕç социал-демократин реакцилĕ лидĕрсем хирĕçнине çапса хуçса, пĕтĕм облăçĕпе тенĕ пекех Майăн пĕрремĕшĕнче фашисăма хирĕçле пĕрлĕхлĕ демонстрацисем туса иртерме пултарнă. Çĕршер пин нимĕç ĕççыннисем фашисăма хирĕçле демонстрацисенче пулнă, ку шутран—Либерц хулинче—20 пин, Устире, Лабем патĕнче—20 пин, Теплицăра-Шановра — 15 пин, Моте хулинче — 15 пин çын (демонстраци хыççăнхи митингра — 23 пин) т. ыт. те пулнă. Çак пунктсенче пулнă митингсенче пуринче те коммунисла партин, социал-демократсен тата чех социалисĕсен оратăрĕсем тухса каланă. Демонстрацинче пулнисем генлейновецсем хăратнине хирĕç тата Германи фашисăмĕ вăрçăпа тапăнас хăрушлăхпа кĕрешме пĕрлĕхлĕ фронт тума чĕнекен пиншер хĕрлĕ йалавсемпе плакатсем йатса пынă.

Опаво хулинче фашиссем — генлейновецсем чех рабочисен ушкăнĕ çине тапăннă; тытăçура тăватă çынна амантнă. Коммунисен „Роте Фане" хаçачĕ майăн пĕрремĕшĕнче пулнă демонстрацисен итогне хак парса çапла çырать: „1938 çулти майăн пĕрремĕшĕ фашисăма хирĕçле çапăçулă вăйсен, пĕтĕм Чехословакинчи нацисен пĕрлешӳлĕ вăйсен каламалла çук пысăк смотăр кунĕ пулса тăчĕ. Пĕрлĕхлĕ фронт çĕршер пин ĕççыннисене демократипе мирлĕ самана ĕçĕ тавра пĕтĕçтерет".

СТОКГОЉМ, майăн 3-мĕш. Скандинави çĕршывĕсенче Майăн пĕрремĕшĕнчи демонстрацисем фашисăма тата вăрçă хирĕç кĕрешес паллăпа пулса иртнĕ.

Демонстрантсем Испани правителствине пăлхавçăсенчен тата интервентсенчен сыхланма кирлĕ хĕçпăшалсемпе хатĕрсене илме правасем пама ыйтнă. Чылай лозунгсем Скандинави çĕршывĕсенчи ĕççыннисене фашисăмпа вăрçа хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе пĕрлешме чĕннĕ тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывне — ССР Сойузне хĕрӳлĕн йуратнине палăртнă.

Швецири коммунисла парти майăн пĕрремĕшĕнче 250 демонстраци туса иртернĕ. Швецинче кăçалхи çул майăн пĕрремĕшĕнчи пур демонстрацисене те, ытти çулхисемпе танаштарсан, пит нумай халăх хутшăннă.

Осло хулинче (Норвеги) фашисăма хирĕç пĕрлешӳлĕ демонстраци туса иртернĕ, ку демонстрацине 20 пин çын хутшăннă. Норвегин ытти хулисенче те пĕрлĕхлĕ демонстрацисем пулса иртнĕ.

(ТАСС).

Париж районĕнчи металлиссен çĕнтерĕвĕ

ПАРИЖ, майăн 3-мĕш. (ТАСС). Париж районĕнчи машинăсем тăвакан, автомобилсем тăвакан тата авиаци предприйатисенчи рабочисемпе предприйати хуçисем хушшинчи хирĕçӳ рабочисем çĕнтернипе пĕтнĕ. Предприйати хуçисен ушкăнлă догăвăрсене ирексĕрех тепĕр хут çĕнетме килĕшмеле пулнă.

Тепĕр хут çĕнелекен ушкăнлă догăвăр тăрăх, рабочисен ĕçукçи ӳсет.

Госпиталљсем аманнисемпе тулса ларнă

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, йулашки вăхăтра пулса иртнĕ çапăçусенче пăлхавçăсен салтакĕсем çав тери нумай аманнă, пăлхавçăсем йышăнса илнĕ Испани территоринчи Гибралтар патĕнчи госпиталљсем аманнă салтаксемпе тулса ларнă. Вырăн çитменнипе темиçе кинематографи çуртне туртса илсе, вĕсенчен госпиталљсем туса хунă.

(ТАСС).

Гитлĕр Италине пынă

Майăн 3-мĕшĕнче фашисла Итали столицине—Рима, йатарласа панă броњăлă пуйăспа Гитлĕр пынă, унпа пĕрле фашисла чиновниксем те пулнă. Гитлĕр çитес умĕн малтанхи кун Итали фашисĕсем асăрханас тата сыхланас тĕлĕшпе пит нумай ĕçсем туса иртернĕ. Римре, сăмахран, „шанчăксăр" пек туйăнакан çынсене çав тери нумай арĕсленĕ, çĕнĕрен арĕсленисене вырнаçтарма тĕрмесенчен уголовлă преступниксене ирĕке кăларма тивнĕ.

Фашисла террора пăхмасăрах, Гитлĕр пынă май Италин чылай хулисенче халăхсем Германине хирĕçле демонстрацисем тунă. Турин хулинче вырăнти кинотеатрта Германине хирĕçлесе тунă демонстрацире пулнисем:

— Пĕттĕр Гитлĕр!

— Гитлĕра пăхăнса пурăнмала мар!—тенĕ.

Полици хутшăнсан çеç демонстрацине чарса лартнă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Критикӑпа самокритикӑ ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме пулӑшаҫҫӗ

Парти органӗ хӑйне суйланӑ организаци умӗнче отчот туни вӑл большевикла парти пурнӑҫӗн, ӗҫӗн никам пӑсайми саккунӗ. Партилӗ массӑ отчотран парти органӗн ӗҫӗ ҫинчен пӗлет, вӑл ӗҫе критиклет тата ҫапла тунипе активланаҭ пулсан, тепӗр йенчен вара массӑ критиклени тата кӑтартусем пани руководитӗл ӗҫне ҫӗнӗ сывлӑш кӗртет, руководитӗле ҫӗнӗ опытпа пуйанлатаҭ.

Акӑ, халӗ парти Трак райкомӗ хӑйӗн ҫулталӑк хушшинчи ӗҫӗсем ҫинчен парти пуҫламӗш организацисенче, кандидат групписенче отчотсем турӗ. Отчотла пухусенче коммуниссем парти райкомӗн ӗҫри ҫитменлӗхсене палӑртса хӑйулӑн, большевикла тишкӗрчӗҫ. Райком ҫумӗнчи парти организацинчи коммуниссем парти райкомӗ хӑйӗн органӗпе, пичетпе ҫителӗксӗр йертсе пынине; райком секретарӗсемпе инструктӑрӗсем парти пурнӑҫӗ ҫинчен райхаҫатра ҫырса тӑманнине палӑртнӑ.

Чапайӗв йачӗпе тӑракан колхоз ҫумӗнчи кандидатсен группинче тӑракан Сымокин йулташ ҫурт-йӗр лартакан техниксем ҫуртӑн илемлӗх ҫине пачах ҫаврӑнса пӑхмаҫҫӗ, тет. Епӗ,—тет вӑл,—ватӑ пулин те ҫутӑ, илемлӗ ҫурт-йӗрте пурӑнма йурататӑп. Малала ҫӗнӗ ҫуртсем лартнӑ чухне ҫуртӑн пысӑкӗшне ҫеҫ пӑхмала мар, унӑн илемлӗхӗ ҫине те ҫаврӑнса пӑхмала,—тет Сымокин йулташ.

Партин хӑшпӗр организацисенчи коммуниссем парти райкомӗ вырӑнти промышлӗннӑҫ ӗҫӗпе ҫителӗксӗр йертсе пынӑ, тесе критиклеҫҫӗ. Политикӑлӑ ӗҫсене йаланах хуҫалӑх ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтарса памала, теҫҫӗ.

Районри пуҫламӗш организацисенче парторгсен суйлавне хатӗрленсе пынӑ май, массӑпа ҫыхӑнуна тытассине ҫирӗплетеҫҫӗ. Парторгсен суйлавне политикӑлӑ тата хуҫалӑхлӑ задачӑсене ӑнӑҫулӑн пурнӑҫа кӗртес палӑпа ирттереҫҫӗ. Йалхуҫалӑхӗнчи стахановецсемпе ударниксем тата комсомолецсем Ленинла партине кӗме заявленисем парасси ӳсе пыраҭ. Акӑ ҫак кунсенче МТС ҫумӗнчи парти пуҫламӗш организацийӗ Налимӑвпа Павлӑв йулташсене сочувствуйушчисен группине илнӗ, вӗсем иккӗшӗ те трактӑр бригадисен бригадирӗсем. ПСК(б)П райком ҫумӗнчи парти организацийӗ Хатайевскипе Алмазӑвӑ комсомолецсене парти кандидатне илнӗ, райӗҫтӑвком ҫумӗнчи парторганизацийӗнче А. Йакӑвлӗв йулташа сочувствуйушчинчен парти кандидатне илнӗ.

Иртнӗ ҫулталӑк хушшинче парти Сталин йулташ кӑтартса панисемпе хӗҫпӑшалланса, контрреволюцилӗ троцкисла бухаринла тата буржуалла-националисла шпионсен йӑвисене ҫӗмӗрсе тӑкас йенӗпе пит пысӑк ӗҫсем туса ирттерчӗ. Партипе государствӑ аппаратне ҫӗнӗ ҫынсем, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн, коммунисӑмшӑн иксӗлми кӗрешекен йулташсем пычӗҫ. Акӑ райӗҫтӑвкомра кадрсен пайӗнче ӗҫленӗ Ҫтепанӑв йулташ халӗ МТС директӑрӗн политикӑ йенӗпе ӗҫлекен заместитӗлӗ, парткабинетра ӗҫленӗ Алмазӑвӑ халӗ райӗҫтӑвком ҫумӗнчи кадрсен пайӗн пуҫлӑхӗ пулса ӗҫлеҫҫӗ т. ыт. те. Пирӗн задачӑ аппарата пынӑ ҫӗнӗ ҫынсене ӗҫре пулӑшса пырасси, отчотпа суйлав вӑхӑтӗнче кӑтартса панӑ ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтересси пулса тӑраҭ.

ПСК(б)П Трак Райкомӗн секретарӗ Закамский.

Парти вӗрентӗвӗпе райкомсен хӑйсен йертсе пымала

ТРАК. Районра парти историне вӗренмели кружоксене пурӗ 12 организациленӗ. Пайанхи куна илсен, вӗсенчен 8 кружокӗ аван ӗҫлет, заҥатисем вӑхӑтра, йӗркелӗ пулса ирттеҫҫӗ. Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче Йем. Йарославский йулташ парти историйӗ ҫинчен ҫырнӑ кӗнекен пӗрремӗш пайне вӗренсе пӗтереҫҫӗ. Кӗҫӗн Шетмӗри кружокра вӗренекен учитӗлсем хӑйсен арӑмӗсене те вӗренӗве йавӑҫтарнӑ, вӗсем арӑмӗсене тӑван ҫӗршыв ҫинчен вӗрентмешкӗн уйрӑм кружок тунӑ.

Анчах, парти историне вӗренмели кружоксем пурте йӗркелӗ ӗҫлемеҫҫӗ-ха. Мартынкасси, Карайри тата Йаманакри кружоксенче заҥатисене йачӗшӗн ҫеҫ туса ирттереҫҫӗ йе пачах та заҥатисем пулмаҫҫӗ. Сӑмахран илсен, апрелӗн 24-мӗшӗнче Йаманакри учитӗлсен кружокӗнче Иванов йулташӑн „Мировая империалистическая война. Оценка войны и тактика большевиков“ йатлӑ темӑ тӑрӑх, лекци вуласа пама пулнӑ. Учитӗлсем заҥатине пурте пынӑ. Докладчике, пӗр сехет хушши кӗтсе ларнӑ хыҫҫӑн, Иванов йулташ ҫитсе кӗрет. Пайан вӑл, лекци вуласах та парасшӑн пулман. Учитӗлсем хытӑ ыйтнине пула, Иванов йулташӑн ирӗксӗрех лекцийе вуласа пама килӗшмеле пулнӑ. Анчах, лекцийе вырӑсла йе чӑвашла тӑвасси ҫинчен ыйту сиксе тухнӑ. Чылайччен тавлашнӑ хыҫҫӑн, лекцийе вырӑсла тума килӗшнӗ.

Иванов йулташ хӑйӗн лекцине тезиса мӗнле ҫырмали ҫинчен пуҫласа калаҭ, 3—4 минут хыҫҫӑн кӗнеке тӑрӑх вуласа пама тытӑнаҭ те ҫапла вара „лекцийе“ вуласа пӗтерет.

Лекци итлеме пухӑннӑ учитӗлсем Иванов йулташӑн „лекцийӗнчен“ ним ӑнланмасӑрах йулнӑ.

Парти Чӑваш Обком бӳровӗ апрелӗн 9-мӗшӗнчи решенийӗнче республикӑра партилӗ-пропагандӑлӑ ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пыраҭ, тесе йышӑнчӗ. Ҫав решени парти историне вӗренмели кружоксене ҫӳрекен учитӗлсене те тивет. ПСК(б) Парти Трак райкомӗн парти историне вӗренмели кружоксене пурне те йӗркелӗ ӗҫлекен туса ҫитерес пулаҭ.

Терентйӗв.

Политикӑлӑ ӗҫе хуҫалӑх ыйтӑвӗпе ҫыхӑнтарман

ШӐХАСАН. Хатӗрлев Комиссариачӗн районри уполномоченнайӗн кантурӗ ҫумӗнчи парторганизацин отчочӗ тӑрӑх, пренире тухса каласнӑ коммуниссем пуринчен ытла партилӗ политикӑлӑ ӗҫри ҫитменлӗхсене палӑртрӗҫ.

Пуҫламӗш организацинче 8 коммунис—3 член, 5 кандидат. Вӗсенчен 6-шӗ ИМЗО-ра вӗренеҫҫӗ. Иккӗшне, вӑл шутрах, парторг Мишуткин йулташа ИМЗО инструктӑрӗ Алексейӗв йулташ ним сӑлтавсемсӗрех кружокран кӑларса пӑрахнӑ.

Начар вӗренсе пыракан коммуниссене парторг та, райкомӑн парткабинечӗ те кирлӗ таран пулӑшса пыман.

— Епӗ парти историне начар вӗренсе пыратӑп. Мана вӗренме йывӑр. Епӗ кӗнекепе ӗҫлеме пӗлместӗп. Анчах мана преподавател те, парторг та, парткабинет та пулӑшмаҫҫӗ, — тет парти членӗ С. Павлӑв йулташ.

Ҫавӑн пекех кӗнекепе ӗҫлеме, конспект ҫырма йӑвӑрри, вӗсене пулӑшу паманни ҫинчен Михайлӑв, Александрӑв йулташсем те каларӗҫ.

Кантурти работниксем хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫсем питӗ ҫителӗксӗр пулса пыраҫҫӗ. РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисене вӗренме халӗ те пуҫӑнман. Обществӑлӑ организацисем—Осоавиахим, СВБ, МОПР, Профсойуз организацисем йапӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫулталӑк хушшинче парти организаци кандидатран 2 ҫынна члена куҫарнӑ, 2 ҫынна сочувствуйушчине илнӗ.

Парти организаци хӑйӗн политикӑлӑ ӗҫне хуҫалӑх ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтарса пыраймас. Хатӗрлев ӗҫӗ районра начар пыраҭ. Аш-какай тӑратас плана 1938 ҫулшӑн 22 процент, сӗт-ҫу хатӗрлевӗпе 1937 ҫулхи плана 66 процент ҫеҫ тултарнӑ. 1937 ҫулшӑн ҫӑм та хатӗрлесе ҫитермен. Коммуниссем, инспектӑрсем хӑйсен обйазаннӑҫӗсене ҫителӗклӗ пурнӑҫласа пымаҫҫӗ. Акӑ, аш-какай тӑратассипе 1938 ҫулхи плана Никифӑрӑв участкинче 17 процент, Архипӑв участкинче 19 процент, Иванов участкинче 20 процент тултарнӑ. Ку ӗнтӗ вӗсем массӑ хушшинче ҫителӗксӗр ӗҫленине кӑтартаҭ.

Пуху хӑйӗн решенийӗнче коммуниссем тата партире тӑман работниксем хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе аванлатас, политикӑна вӗренес ӗҫре коммуниссене пулӑшу парса пырас, парти ретне ӳстерес ӗҫе вайлатас, производства дисциплинине ҫирӗплетес тӗлӗшпе вирлӗн ӗҫлеме ҫӗнӗрен суйланӑ парторга наказ парса хӑварчӗ.

С. Соколов.

Парторга Свистунов йулташа суйларӗҫ

КАНАШ. (Хамӑр корр). Канашри педучилищӑри парти организацин отчотпа суйлав пухуне коммуниссем пурте пынӑ. Парторг Терентйӗв йулташ парти организацин ӗҫӗсем ҫинчен отчот туса пачӗ. Унӑн отчочӗ 40 минута тӑсӑлчӗ.

— Ыйтусем парӑр,—терӗ вӑл.

— Хӑвӑра парторга суйланӑранпа миҫе комсомолеца есӗр парти ретне илнӗ?

— Пӗрре те илмен.

— Суйлав пулнӑранпа миҫе пуху туса ирттернӗ?

— Пӗтӗмпе 4 пуху.

— Студентсем хушшинче пӗлӳ тӗлӗшӗнчен кайа йулса пыракан комсомолецсене пулӑшассипе парторг мӗн те пулсан татӑклӑ ӗҫ тунӑ-и?

Акӑ мӗнле ыйтусем тухса тӑраҫҫӗ парторг отчотне итленӗ хыҫҫӑн. Парторг отчотӗнчен, парти организацийӗ кулленхи ӗҫре коммуниссемпе мӗнле ӗҫлени, партийе илес тата сочувствуйушчинчен кандидата, кандидатран члена куҫарас тӗлӗшпе мӗнле татӑклӑ ӗҫсем тунине курма ҫук. Доклад конкретлӑ мар, чӗрӗ ӗҫсем сахал.

Пренире тухса калакансем парторг ӗҫне хытӑ тишкӗрчӗҫ. Педучилищӑри парти пуҫламӗш организацийӗ коммуниссемпе ҫителӗклӗ таран ӗҫлемен. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ парторг 10 уйӑх хушшинче те коммуниссене пухса 4 пуху ҫеҫ туса ирттернӗ.

Педучилищӑра 154 комсомолец, финтехникумра 50 комсомолец, апла пулин те парти организацийӗ пӗр ҫынна та парти ретне илмен. Кандидатсене те партине куҫарман.

ПСК(б)П Канаш райкомӗ те пуҫламӗш парторганизацине ӗҫре пулӑшса пыман. Ҫулталӑк хушшинче парторганизацине пӗр райком инструктӑрӗ те пырса курман.

— Парти организацийӗ коммуниссемпе уйрӑмӑн ӗҫлемен. Ленинисӑм кружокӗнче вӗренекенсене тӗрӗс пухса йӗркелеменнипе вӗренӳ пахалӑхӗ начар. Васильйӗвпа Йегорӑв йулташсен политикӑлӑ пӗлӗвӗ ҫителӗксӗр пирки, вӗсем темӑсене ӑнланса йулаймаҫҫӗ. Ленинисӑма лайӑх ӑнланас пулсан, малтан парти историне тӗплӗн вӗренес пулаҭ. Пирӗн кружокра парти историне пачах пӗлменнисем те пур. Вӗсене вальли уйрӑм кружок тума шутламан,—тет Свистунов коммунис.

Кружок заҥатийӗсем ҫӳреккӗн ирттеҫҫӗ. Заҥатисене хатӗрленсе пымаҫҫӗ. Хӑшӗ пӗрисем пачах та ҫӳремеҫҫӗ (Винник, Шишкин).

Терентйӗв парторг партилӗ-политикӑлӑ ӗҫе лайӑхлатма тӑрӑшман.

Пуху педучилищӑри парти организатӑрне Свистунов йулташа унӑн заместитӗлне Ухӑвӑ йулташа суйласа хӑварчӗ.

Арк. Нестӗрӑв.

Пурнӑҫа тата лайӑхлатас килет

Кӗҫӗн Кипекри (Вӑрнар р.) „Память Ленина“ колхозра РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисене вӗренме 12 кружок организациленӗ. Кружоксенче вӑтам шкулти учитӗлсемпе колхозри активиссене вӗрентеҫҫӗ.

Пӗр заҥатинче 5-мӗш бригадӑри ватӑ колхозник Трофим Васильйӗв йулташ тухса каларӗ: „Епӗр ӗлӗк питӗ чухӑн пурӑннӑ, пирӗн йалта хут пӗлекенсем пӗр ҫын та пулман. Ҫӗр ӗҫлемели машинӑсене епӗр ун чухне курман та. Ҫитменнине тата ҫӗрӗ те сахал, начар пулнӑ. Совет влаҫӗ пуличчен пуйансем ҫеҫ лайӑх пурӑннӑ. Халӗ пирӗн пурнӑҫ йалтах урӑхла. Халӗ епӗр пур ӗҫсене те машинӑсемпе тӑватпӑр, колхоза пӗрлешнӗ хыҫҫӑн пурте пуйан пурнӑҫпа пурӑнма тытӑнтӑмӑр. Епӗ ватӑ, анчах манӑн тӑрӑшса ӗҫлес килет, пурнӑҫа татах та лайӑхлатас килет. Сталинла Конституци пире ватӑ ҫынсене те, хӗрарӑмсене те — пурне те пӗр пек пысӑк правасем пачӗ. Ҫав правасемпе уҫӑ курса епӗ, декабӗрӗн 12-мӗшӗнче ССР Сойузӗн Верховнӑй Советне тӑратнӑ кандидатсемпӗн хам сасса патӑм. Сталин йулташ пире татах та телейлӗ, савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ патне йертсе пыраҭ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗнче — ийунӗн 26-мӗшӗнче хам сасӑма Ленин—Сталин парти ӗҫне, социалисӑм ӗҫне чӗререн парӑннӑ ҫынсемпӗн паратӑп“.

В. Иванов.

Суйлав литератури магазинра ҫук

Йелчӗк. (Телефонпа). Районра пурӗ 258 кружок ӗҫлет. Вӑл кружоксенче пӗтӗмпе 6985 суйлавҫӑ суйлав саккунӗсемпе конституци ҫинчен вӗренеҫҫӗ. Уйрӑмӑнах Сӑрӑм, Лаш Тайапа йалӗсенчи тата „Смычка“ колхозри кружоксем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Смычка“ колхозра 27 кружока 591 суйлавҫӑна йавӑҫтарнӑ. Романӑвпа Васильйӗв агитатӑрсем кружок заҥатисенче РСФСР тата Чӑваш АССР Конституцийӗсене ССРС Верховнӑй Совечӗн 1-мӗш ҫеҫҫи материалӗсене, суйлав саккунӗсене вӗрентеҫҫӗ, хӑйсен ӗҫӗнче вӗсем РСФСР карттипе усӑ кураҫҫӗ.

Колхозри культмаг суйлава хатӗрленес тӗлӗшпе питех те начар ӗҫлет. Унта, РСФСР Верховнӑй Советне суйламали Положенисӗр пуҫне, урӑх нимӗнле литературӑ та ҫук.

Патрикел йалсоветӗнче суйлава хатӗрленме тытӑнман та. Кунта пӗр кружок та ӗҫлемест.

Гер. Иванов.

Ту-Мучар вулав ҫурчӗ

Ту-Мучарти (Йетӗрне р.) вулав ҫурчӗ йалти ӗҫҫыннисен пушӑ вӑхӑтсенче пухӑнмали йуратнӑ вырӑнӗ пулса тӑчӗ. Колхозниксем кунта ушкӑнпа радио итлеҫҫӗ, хаҫат-журналсем вулаҫҫӗ, ҫпектакљ кураҫҫӗ, концерт итлеҫҫӗ т. ыт. те. Вулав ҫурчӗн библиотекинчен илсе вулама кӗнекесем ҫителӗклӗ, вулакансен йышӗ те ӳссех пыраҭ. Халӗ библиотекӑран 310 ҫын куллен кӗнеке илсе тӑраҭ.

Вулав ҫурчӗ ҫумӗнче тӗрлӗрен кружоксем ӗҫлеҫҫӗ. Уйрӑмах драмкружок аван ӗҫлет. Кружокра 37 член, вӗсенчен хӗрарӑмсем 12. Кӑҫал пӗтӗмпе 20 ҫпектакљ лартнӑ. Ҫпектакљсем лартма кӳршӗри йалсене те тухнӑ.

Массӑ хушшинче агитаци ӗҫне лайӑх организациленӗ. Халӗ кунта ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б)П Тӗпкомӗ „Колхозсенче тупӑшсене тӗрӗс мар валеҫни ҫинчен“, „Колхозниксене колхозран кӑларма чарасси ҫинчен“ тата „Йединоличниксен хуҫалӑхӗсем ҫине хунӑ налогсемпе ытти обйазательствӑсем ҫинчен“ кӑларнӑ постановленисене сӳтсе йаврӗҫ.

Ҫак кунсенче вулав ҫуртӗнче йалсовета кӗрекен колхозсенчи ҫтена хаҫат редакторӗсене пухса канашлу туса ирттернӗ. Канашлура ҫтена хаҫачӗсемпе вулавҫӑсен мӗнле ӗҫлесе пымали ҫинчен, ака вӑхӑтӗнчи културӑлӑ массӑлӑ ӗҫе мӗнле йӗркелемели ҫинчен сӳтсе-йавнӑ.

Вулав ҫурчӗ хӑйӗн вулаканӗсемпе те аван ӗҫлет. Кӑҫал вулакансене пухса 4 хутчен конференци туса ирттернӗ.

Йалсовета кӗрекен йалсенче РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисене вӗренме 10 кружок организациленӗ. Кружоксенче пурӗ 557 суйлавҫӑ вӗренет. Ку кружоксенче вулав ҫурчӗ вӗрентсе хатӗрленӗ агитатӑрсем ӗҫлеҫҫӗ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали кун ҫинчен пӗлнӗ хыҫҫӑн, колхозниксен суйлав саккунӗсене вӗренес хавасӗ тата та ӳсрӗ.—Иртнӗ суйлава—ССР Сойузӗн Верховнӑй Совечӗн суйлавне пысӑк пахалӑхпа ирттертӗмӗр. РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне тата лайӑх хатӗрленнипе кӗтсе илетпӗр. РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, халӑх ӗҫӗшӗн чӗререн ӗҫлекен чи лайӑх ҫынсене суйлатпӑр,—теҫҫӗ Ту-Мучарти Ленин йачӗпе тӑракан колхоз членӗсем.

Н. Цветков.

Уйав чаплӑ иртрӗ

Майӑн 1-мӗшӗ. Ҫурхи хӗвел хӗртсе пахаҭ. Ҫатра-Хучахмат йалӗ (Шупашкар р.) уйав тумӗпе тумланнӑ. Лозунгсем, плакатсем ҫуталса тӑраҫҫӗ, хӗрлӗ йалавсем вӗлкӗшеҫҫӗ. Май уйавне ирттерме 300 ҫын ытла пухӑннӑ, вӗсем йуланутсемпе, велоҫипедсемпе тата ҫуран пынӑ. Ватти-вӗтти, ҫамрӑкки—пурте капӑр тумланнӑ.

Митинга йалсовет председателӗ Йегорӑв йулташ уҫаҭ. Унтан саламлӑ сӑмахсем калаҫҫӗ. Митинг хыҫҫӑн суйлав тӗлӗшпе ӗҫлекен агитатӑрсем колхозниксемпе колхозницӑсене пулас суйлавсем ҫинчен ӑнлантараҫҫӗ. Чӑпта ҫаптаракан ертел ударниксене 1000 тенкӗлӗх преми пачӗ.

Серебрйаков-Ошмаҥ.

Артиллери кучухнехи вӑрҫӑра

Артиллери, ҫӗнӗ танксемпе авиаци пек тӑшмана ҫӗмӗрмели ҫӗнӗ вӑрҫӑ хатӗрӗсем пур пулсан та, кучухнехи вӑрҫӑра тӗп ҫарсенчен пӗри пулаҭ.

К. Й. ВОРОШИЛӐВ.

Артиллери тӑшмана кӗрешес ӗҫре хӑй хӑватлӑ йапала пулнине тахҫанах кӑтартнӑ. Анчах унӑн пултарулӑхӗ пӗтӗмпе 1914—1918 ҫулсенчи империалисӑм вӑрҫи вӑхӑтӗнче чечекленме пуҫланӑ.

Акӑ, империалисӑм вӑрҫи ҫулӗсенче тӗрлӗ государствӑсенче артиллери ӳсиине кӑтартакан таблицӑ (тӳпене перекен артиллерисӗр пуҫне):

	Вӑрҫӑ пуҫланнӑ вӑхӑтра.	Вӑрҫӑ чарӑннӑ вӑхӑтра.
Российӑ	7.088 оруди	12.299 оруди
Германи	8.404 оруди	25.000 оруди
Франци	4.668 оруди	17.500 оруди
Англи	2.000 оруди	11.000 оруди
Итали	1.700 оруди	11.000 оруди

Империалисӑм вӑрҫинче артиллерипе персе тунӑ ҫухатусем ӗлӗк ҫуран ҫарсем персе тунӑ ҫухатусенчен темиҫе хут ытларах пулнӑ. Тӗслӗхрен, 1904—1905 ҫулсенчи вӑрҫӑра вырӑс ҫарӗ тунӑ мӗн пур ҫухатусенчен ҫуран ҫарсемпе 85 процент, артиллерипе—14 процент, ытти майсемпе — 1 процент тунӑ пулнӑ. Империалисӑм вӑрҫи вӑхӑтӗнче патша ҫарӗ тунӑ пӗтӗм ҫухатусенчен пехотӑпа 9,7 процент ҫеҫ тунӑ, артиллерипе—78,3 процента ҫити, ытти майсемпе — 12 процент тунӑ.

1914—1918 ҫулсенчи вӑрҫӑн пирвайхи кунӗсенчех снарйадсемпе тунӑ расхутсем вӑрҫакан государствӑсен малтанхи шухӑшӗсене пӑсса тӑкнӑ. Ӗлӗкхи вӑрҫӑсен опычӗ ҫӗнӗ вӑрҫӑпа нийепле те танлашма пултарайман. Сӑмахран, Германи 1870—1871 ҫулсенче франко-прусски вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче мӗн пурӗ те 650.000 снарйад пӗтернӗ пулнӑ, тӗнче вӑрҫи вӑхӑтӗнче—тӗрлӗ калибӗрлӗ 300.000.000 снарйад ытла пӗтернӗ. Вӑрҫакан ҫӗршывсен пӗтӗм фронтӗсенче артиллерипе пурӗ пӗр мӗлйард хут ытла пенӗ.

Империалисӑм вӑрҫин опычӗ артиллери пултарулӑхӗ хӑватлӑ пулни ҫинчен нумай примерсем параҭ. Акӑ вӗсенчен пӗри.

1917 ҫулхи августӑн 13-мӗшӗнче ҫутӑлас умӗн нимӗҫсен Верден сывӑхӗнчи позицийӗсем ҫинче кӗтмен ҫӗртенех Франци артиллерин вутлӑ тӑвӑлӗ пуҫланса кайнӑ. Вут пурне те пӗтернӗ: ҫынсене, пулеметсене, минометсене, орудисене, окопсене, блиндажсене, пытанмали вырӑнсене. Ҫак вутлӑ металл ҫӑмӑрӗ ҫичӗ талӑк хушши кӗрленӗ. Ҫанталӑк йапӑх пулни ҫеҫ канонадӑна вӑхӑтлӑха чарнӑ, ҫавӑн чух ҫеҫ орудисем кӗскӗ вӑхӑтлӑха кӗрлеме чарӑннӑ. Августӑн 20-мӗшӗнче французсен ҫуран ҫарӗ артиллери вучӗн хӳттипе нимӗҫсен позицийӗсем ҫине атакӑпа кӗрсе кайса, нумай мар ҫухату тусах вӗсене тытса илнӗ.

Мӗнле майсемпе тунӑ пулнӑ-ха ҫак ҫӗнтерӗве? Французсем наступлени туса пынӑ 17 километр тӑршшӗ фронтра 948 ҫӑмӑл оруди, 1.318 йӑвӑр оруди, 66 питӗ йӑвӑр (пысӑк хӑватлӑхлӑ) оруди пулнӑ, вӗсемсӗр пуҫне тата окопсенчи (траншейӑсенчи) артиллерире 247 оруди пулнӑ. Фронтӑн кашни километрӗ пуҫне вӑтамран 152 оруди тивнӗ. Ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче пурӗ 4 мӗлйун снарйад —420 пин тоннӑ йӑвӑрӑшлӗх персе йанӑ пулнӑ. Ҫав снарйадсене турттарса тӑма 240 чугунҫул пойӑсӗ кирлӗ пулнӑ. Нимӗҫсен кашни метр окопӗ пуҫне французсем 6 тоннӑ снарйад персе йанӑ. Ҫак цифрӑсем Верден сывӑхӗнче 1917 ҫулхи август уйӑхӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫура пулнӑ артиллерин ҫӗмӗрсе тӑкакан вучӗ ҫинчен уҫҫӑнах каласа параҫҫӗ.

ССР Сойузӗнчи граждӑн вӑрҫи вӑхӑтӗнче те артиллери татӑклӑ вырӑн йышӑнса тӑнине кӑтартакан примерсем нумай пулнӑ. 1918 ҫулхи октйабӗрте Краснов генералӑн шурӑ бандисем Царицын патне сывӑхах пырса ҫитнӗ. Револющин кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫри опорлӑ пункчӗ умне уҫҫӑнах хӑрушлӑх килсе тухнӑ. Тӑшмана Царицынран хӑваласа йама чи татӑклӑ мерӑсем йышӑнмала пулнӑ. X-мӗш арми командуйушчийӗ Ворошилӑв йулташ Воропоновӑ станци районне май килнӗ таран ытларах артиллери пухса тӑшман ҫине йышлӑ артиллери вучӗпе сиксе ӳкме приказ панӑ.

Октйабӗрӗн 17-мӗшӗ тӗлне фронтӑн 5 километр тӑршшӗ участки ҫине 27 батарей илсе пынӑ. Октйабӗрӗн 17-мӗшӗнче ҫутӑлас умӗн шурӑ бандитсем атакӑ пуҫланӑ. Вӗсем Царицына кӗрсе кайма ӗмӗтленнӗ. Анчах лайӑх пӗлсе хатӗрленӗ хӗрлӗ артиллери вучӗ вӗсен ҫулне пӳлсе лартнӑ. Шурӑгвардейцӑсен утлӑ ҫарӗпе ҫуран ҫарӗн урса кайнӑ атакисене ҫӗнтернӗ. Артиллерипе, бронӗлӗ пуйӑссемпе хӗҫпӑшалланнӑ I-мӗш Коммунисла дивизи, иккӗ сводлӑ бригадӑ тата Царицынри рабочисен отрйачӗ контрнаступлени тума тытӑннӑ. Шуррисем кайала пӑрахса тарнӑ.

Империалисӑмла вӑрҫӑ пӗтнӗ ҫулсенчех, ҫапӑҫу хирӗсене, техникӑлӑ ҫӗнӗ май—танксем килсе тухнӑ. Ку вӑхӑта авиаци те палӑрмалах ӳснӗ. Ҫак иккӗ ҫӗнӗ ҫар пайӗсем артиллерине пӑртак тӗксӗмлетнӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑн часах, танксемпе авиаци вӑрҫӑра тӗп вырӑн йышӑнаҫҫӗ, тенӗ сасӑсем илтӗнме пуҫланӑ; артиллерийе иккӗмӗш вырӑна хӑварнӑ. Анчах хальӗ Испанире тата Китайра пыракан вӑрҫӑсен опычӗ ҫак тӗрӗс мар теорисене ӳпӗнтерсе йачӗ. Паллах, артиллери пулӑшмасан ҫуран ҫар та, танксем те, авиаци те хӑйсен умне лартнӑ задачӑсене ӑнӑҫлӑн татса параймаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн полевой уставӗ артиллери вӑрҫӑра мӗнле вырӑн йышӑнни ҫинчен питӗ уҫҫӑн калаҭ. **„Артиллери—**тенӗ уставра,—**типӗ ҫӗр ҫинчи пур ҫар пайӗсенчен те вайлӑрах тата хӑватлӑрах вутлӑ вай тытса тӑраҭ... Наступлени вӑхӑтӗнче артиллери вучӗ типӗ ҫӗр ҫинчи пур ҫар пайӗсем вальли те ҫул уҫса параҭ тата оборонӑ вӑхӑтӗнче тӑшман ҫулне пӳлсе лартаҭ“.**

Наступлени тӑвакан вӑрҫӑра артиллери малтан тӑшманӑн танксем ҫине перекен орудийӗсене тата оборонӑ пулемечӗсене пӗтерет тата ҫул ҫинчи тӗрлӗрен чӑрмантаракан йапаласене ҫӗмӗрет. Ҫав вӑхӑтрах хӑватлӑ тата инҫе перекен артиллери тӑшман артиллерине пӗтерет тата унӑн тылне ҫӗмӗрет. Артиллери танксем вальли ҫул уҫса панӑ хыҫҫӑн, танксем шалалупа карса хунӑ вырӑнта ҫуран ҫар вальли ҫул туса параҫҫӗ те, оборонӑра тӑракан тӑшман ҫине кӗрсе кайаҫҫӗ. „Инҫе перекен“ танксем, куҫса пыракан артиллери вучӗн хӳттипе, оборонӑн тылне кӗрсе кайса тӑшман артиллерине, резервисене, штабӗсене тата ҫыхӑну тытмалисене ҫӗмӗреҫҫӗ, „пехотӑна пулӑшакан“ танксем, вӗсем вальли йатарласа уйӑрнӑ орудисем пулӑшнипе, оборонӑри перекен вырӑнсене ҫӗмӗрсе, хӑй хыҫҫӑн ҫуран ҫара илсе пыраҫҫӗ.

Артиллери хӑйӗн вучӗпе ҫапӑҫу пӗтиччен оборонӑн кайри вырӑнсенчи пулемечӗсене тата танксем ҫине перекен орудийӗсене ҫӗмӗрет, хӑйӗн ҫуран ҫарӗ ҫине танксем тапӑнасран тата тӑшман ҫарӗ контратакӑ тӑвасран сыхлаҭ, тӑшман артиллерийӗпе авиацийӗ ҫине перет. Ҫуран ҫар малала тапӑнса кайсан, артиллери те малала куҫса ҫӗнӗ позицисенчен пеме тытӑнаҭ. Чакса кайакан тӑшман ҫарӗсене артиллери, хӑйӗн ҫуран ҫарӗн малтанхи ешелонӗсем патне тухса, пӗр чарӑнмасӑр перет. Ҫапла ӗнтӗ, артиллери, наступлени тӑвакан вӑрҫӑра ҫапӑҫу пуҫланса вӗҫне ҫитиччен ҫуран ҫарпа танксене пулӑшса пыраҭ, вӗсем вальли ҫул уҫса параҭ тата ҫапӑҫура ӑнӑҫу тумали майсем туса параҭ.

Артиллери оборонӑ вӑхӑтӗнче те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҭ. Кучухнехи оборонӑ пуринчен малтан танксем тапӑннине хирӗҫ тӑма пултармала. Танксене хирӗҫ тӑракан оборонӑ тӗрекӗ вӑл, танксене хирӗҫле инженерлӑ заграждениссене май, пӗчӗк калибӗрлӗ орудисем пулаҫҫӗ. Вӑл орудисене оборонӑра (фронт тӑрӑх та фронт урлӑ) шахмӑт йӗркипе вырнаҫтарса лартаҫҫӗ, вӗсем тӑшман танкӗсем пур йенчен тапӑннине те хирӗҫ тӑма хатӗр тӑраҫҫӗ.

Йатарласа танксене хирӗҫ тӑмали орудисӗр пуҫне, йулашки артиллери те, тӑшман танкӗсем хӑрушлӑх кӳме пултаракан йенеле пеме хатӗр тӑраҭ.

Оборонӑна хатӗрленсе ҫитнӗ. Тӑшман тапӑнасса кӗтеҫҫӗ. Малтанах хатӗрлесе хунӑ инҫе перекен артиллери тӑшман ҫине хӑйӗн вучӗ ҫитме пултарнӑ вырӑнах пеме пуҫлаҭ. Вӑл тӑшмана тӑвӑр вырӑнсенчен (кӗперсем, каҭсем урлӑ) тухнӑ чух йе тата йалсенчен, вӑрмансенчен тухнӑ чух походлӑ йӗркепе пынӑ вӑхӑтра сийенлет.

Тӑшман оборонӑ патне ҫитес атакӑ тума хатӗрленнӗ вӑхӑтра, артиллери унӑн орудийӗсем ҫине, ҫуран ҫарӗ тата танкӗсем ҫине персе чӑрмантараҭ. Атакӑ вӑхӑтӗнче артиллери хӑйӗн пӗтӗм вутне тапӑнакан танксем ҫине, унтан вара ҫуран ҫарсем ҫине йараҭ, ҫав вӑхӑтрах вӑл тӑшман артиллерийӗ ҫине пеме те чарӑнмасҭ.

Сывлӑшран тапӑнасран сыхланнӑ вӑхӑтра та артиллери питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҭ. Тӳпене перекен лайӑх артиллери тата истребителлӗ авиаци бойецсене фронтра, мирлӗ халӑхсене тылра тӑшман сывлӑшран тапӑннинчен шанчӑклӑн сыхлама пултараҫҫӗ.

Кучухнехи Тинӗс-Ҫар Флочӗн пултарулӑхне те, уйрӑм ҫар карапӗсен хисепӗпе, хӑвӑрт ҫӳренипе тата нумай тийеннипе ҫеҫ мар, тата вӗсен ҫинчи орудисен калибӗрӗпе, инҫе пеме пултарнипе шутлаҫҫӗ.

Капиталисла государствӑсен пур ҫарӗсенче те хальӗ пур тӗрлӗ тата калибӑрлӑ артиллери тӑваҫҫӗ, инҫе тата хӑвӑрт перекен, шултра калибӗрлӑ тата пӗчӗк калибӗрлӑ артиллери тӑваҫҫӗ. Нумай ҫарсенче артиллерийе лашасемпе туртарса ҫӳрес вырӑнне механикӑлӑ вайсемпе туртарса ҫӳремеле тӑваҫҫӗ, ҫаплипе вӑл нумайрах тата хӑвӑртрах куҫса ҫӳрекен пулаҭ.

Кучухнехи артиллерин пултарулӑхне пӗлес тесен империалисӑм вӑрҫи вӑхӑтӗнчи орудисем мӗн чухлӗ инҫете пенипе хальхи орудисем мӗн чухлӗ инҫете пенине танлаштарса пӑхни те ҫителӗклӗ. Йут ҫӗршывсенчи литературӑн кӑтартӑвӗсем тӑрӑх, империалисӑм вӑрҫи вӑхӑтӗнче дивизи артиллеринче тупӑсем 11,4 километра, гаубицӑсем — 10,2 километра пенӗ. Хальхи дивизи артиллеринче 14,5 километра перекен тупӑсем, 13,2 километра перекен гаубицӑсем пур. Корпусартиллерийӗнче 12,7 километра перекен пушкӑсем, 11,5 километра перекен гаубицӑсем пулнӑ. Хальхи корпус артиллерийӗ 20 километра перекен пушкӑсемпе тата 19,5 километра перекен гаубицӑсемпе хӗҫпӑшалланнӑ. Империлисӑм вӑрҫи вӑхӑтӗнче пысӑк хӑватлӑхлӑ артиллерире 18,5 километра перекен пушкӑсем пулнӑ, хальхи йӑвӑр артиллерири пушкӑсем 52 километра, гаубицӑсем — 27 километра пеме пултараҫҫӗ.

Пирӗн социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывӑн хӗҫпӑшаллӑ вайӗсене тӑвас ӗҫре тата ҫар хӑватне ҫирӗплетес ӗҫре партипе правительствӑ тата Сталин йулташ хӑй питӗ тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн артиллерийӗ пулас вӑрҫӑра вӑл хӑй чи хӑватлӑ, чи инҫе перекен чи хӑвӑрт перекен тата чи хӑвӑрт куҫса ҫӳрекен артиллери пулнине кӑтартӗ. Тӳрӗ перекен хӑватлӑ вучӗпе вӑл фронтра бойецсен, тылра—мирлӗ пурнакансен мӗлйуншар пурнӑҫне ҫӑлса хӑварӗ. Вӑл пирӗн хапрӑксемпе савӑтсене пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеме, пирӗн хуласемпе йалсенче лӑпкӑ пурнӑҫпа пурӑнма пулӑшӗ. Вӑл пирӗн государствӑ ҫине аллине ҫӗклеме хӑйне тӑшмана таптаса, ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнӗ.

1938 çулхи çураки

ĔÇРИ ÇИТМЕНЛĔХСЕНЕ ХАЛЕХ ТӲРЛЕТМЕЛЕ

Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ С. Коротков йулташ Парăчкав МТС-че пулса, МТС çуракине мĕнле хатĕрленсе тухнине тĕрĕсленĕ. Тĕрĕслӳ вăхăтĕнче Машинпа Трактăр Станцин çитменлĕхĕсем нумай палăрнă. МТС руководителĕсем сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене тӳрлетес вырăнне, вĕсене ытларах сарса пыни палăрнă. Трактăр паркĕ хатĕр мар, вĕсене йусанă çĕрте хуçасăрлăх пуç пулса тăнă. Çавăнпа та, трактăрисем хăйсем те хăш трактăра кам йусанине пĕлмеççĕ. Трактăрисем уйра ĕçленĕ чухне вырта тăмалли будкăсене йусаман, çĕнĕрен те лартман. Трактăрсем ĕçленĕ çĕре çунтармалли шăпаласем илсе тухма пичкесем йусанă мар. Апрелĕн 26-мĕшĕнче кӳрсе пынă кăрасçин, йусавсăр пичкене йăрса лартнипе, çĕркаçĕнчен 40 килограм йухса тухнă. МТС çуракине хатĕрленĕ вăхăтра трактăрисен пурнăçне йăлă условине лайăхлатас пирки нимĕн те туман. Будкăсем çитмен пирки халĕ çăмăрлă кунсенче трактăрисен трактăрсене уйра ларта хăварсах йăла таврăнма тивет. Çавăнпа вăра трактăрсем ĕçлемесĕр лараççĕ т. ыт. те.

Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ С. Коротков йулташ хăйĕн приказĕнче Парăчкав МТС директăрне сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерме тытăнманшăн; трактăрсене тата халхуçалăхĕн ытти машинисене начар йусанăшăн, трактăрисем валли, трактăрсене йусанă вăхăтра, çавăн пекех ака вăхăтĕнче, кирлĕ условисем туса паманшăн хытă йатламала тунă. Кунпа пĕрлех, çав çултех асăннă çитменлĕхсене Губин йулташ çывăх кунсенчех тӳрлетсе çитермесен, ăна уголовлă йĕркепе ответ тыттарасси çинчен асăрхаттарнă.

Парăчкав МТС урокне пур МТС директăрĕсем те хисепе илес пулат̆. Кашни директăрăн производствăри çитменлĕхсене пĕтермешкĕн халех тăтăклă ĕçсем тумала. Пур трактăр бригадисен валли те будкăсем пулмала, вĕсене мĕн кирлисем пурте пулмалла. Уйрăмăнах:

а) кашни будкăрах трактăрисене вырта капма нарсем, ĕçмелли шыв тытма тимĕр пичке пулмала. Будкăсенче хаçатсем, шашкăсемпе шахматсем тата музыкă инструменчĕсем (балалайкă, гитар, хуткупăс) пулмала;

б) çăмăрлă çанталăксенче трактăрисем хăйсен тумтирĕсене типĕтмешкĕн кашни будкăрах тимĕр кăмака пулмала;

в) кашни будкăрах çăвăнма умывальник, супăнь тата алшăли пулмала;

г) Чăваш республикинче 1938 çулхи йалхуçалăх çулне лайăх туса иртерме Тутар тата Мордва республикисемпе тунă социалисăмла ăмăрту договăрне, 1938 çул валли МТС тата бригадăсем хушшинчи ăмăрту договăрĕн условине тата кашни трактăр хăйĕн куллениех ĕç планне мĕнле тултарса пыни çинчен кăтартакан сводкăна будкăсене çакса хумала;

д) будкăсем çумĕнче куçса çӳрекен мастерскойсем организацилемеле.

Çаксемпе пĕрлех, Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ çурхи ĕçсен планне чи кĕске срукра пурнăçласси çинчен пур МТС директăрĕсене те асăрхаттарнă.

Çураки ĕçне йертсе пыман районра

ШАХАСАН. Районра çураки ĕçĕ хĕрсех пырат̆. Апрелĕн 27-мĕшне районĕпе 193,10 гектар тула, 380 гектар сĕлĕ, 24,8 гектар хуратул, 15 гектар урпа, 93 гектар викă, ытти культурăсене 15 гектар акнă.

Анчах çураки ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсемпе чăрмавсем те сахал мар. Чылай çĕрте акан малтанхи кунсенче агротехникăлă ĕçсене тĕрĕс туса пыман. Мăн кун тăвасшăн пула апрелĕн 25-мĕшĕнче Çĕнĭал Чуракассинчи „Ш-мĕш Интернационал" тата Тăвă Шĕкĕрти колхозсем акана тухман. Кунта колхоз председателĕсемпе бригадирĕсем — ĕç организаторĕсем пулас чухне хăйсем ĕçке йарăннă. Тăрăнти „Красный партизан" колхозра та çавăн пекех пулнă.

Шăхасан тата ытти колхозсенче çеклăкăшă усă курассине хакламасăр тăнă. Шăхасан колхозĕнче 3 гектар çине вăрлăха вутпуççинчен чӳхемесĕр акса хăварнă. Йамаш колхозĕ те вăрлăхсене каçа айне туса хăвармасăр акнă. Райком çекретарĕ Апмарин йулташ ĕçе тӳрлетме хушсан çеç вĕсем касă айне акма тытăннă. Высокăкăри колхозра çĕре çиелтен, 5 — 6 сантиметр тарăнăш çес сухаласа акнă.

Трактăр бригадисен ĕçĕнче те чăрмавсем сахал мар. Родновăн йулташ йертсе пыракан 14-мĕш бригадăра Никитин трактăрис 2 кун хушши ĕçе тухмарĕ, çав бригадăрах Куликов трактăрис трактăра вăхăтра çу сĕрмесĕр ĕçлетернипе подшипнике щарантарса йанă. Çавăн хыççăн 1 трактăр 10 кун хушши ĕçлемесĕр ларнă. Халь ĕç хĕрсе пырас чух хăшпĕр трактăрсем динамсăр лараççĕ. Трактăрисен хушшинче культурăлă массăлă ĕç çителĕксĕр сарăлса пымат̆. Чылай бригадăсенче трактăрисем социалисăмла ăмăртăва тухса хăйсем çине обйазательствăсем илмен.

Район кĕрхи тырăсем çине клевĕр акса хăварас плана та тултарман. Çак тĕслĕхсем пĕтĕмĕшпех райçĕрĕç пайĕпе МТС дирекцийĕ çуракине конкретлă йертсе пыманнине кăтартаççĕ.

В. Чернов.

Трактăрсемпе туллин усă курмала

ЙЕТĔРНЕ. (Телефон тăрăх). Районра трактăр бригадисем 10, вĕсенчен 5 бригади ĕçе тытăннă. 5 бригадă апрелĕн 28-мĕшне 315 гектар сухаланă. 174 гектар сӳренĕ, 27 гектар çинче культиваци тунă. Йетĕрне хулинчи Шарăв йулташ йертсе пыракан трактăр бригади 43 гектар сухаларĕ.

Иванькăвăри трактăр бригади те ĕç тухăçлăхне çӳле хăпартса ĕçлет. Ку бригадă апрелĕн 28-мĕшне 50 гектар сухаларĕ.

Анчах, районри хăшпĕр трактăр бригадисенче трактăрсемпе туллин усă курмаççĕ. Тушкассинчи трактăр бригадинче 3 кун хушши трактăрсене ĕçлемесĕр тăратнă. Кăшаркассинчи трактăр бригади апрелĕн 24-мĕшĕнче çурхи сухана тытăннă. Анчах трактăриссем çине тăрса ĕçлеменнине пула бригадăри трактăрсемпе 4 кун хушшинче те 20 гектар çеç сухаланă.

Трактăрсемпе туллин усă курманни райçĕрĕç пайĕнчи агрономсем кахалланса ĕçленинчен те нумай килет. Акă, Тушкассинчи трактăр бригадинчи трактăрсем 3 кун ĕçлемесĕр ларни йăлтах райçĕрĕç пай агрономĕ Аникин йулташ айăпĕпе пулнă. Вăл колхозсене тата уйа тухса çӳремест. Канцеларинче ларса вăл çĕр типсе пынине курмасăр, çĕр чĕре тесе трактăрсемпе сухалама ирĕк памасăр ларнă.

Н. Цветков.

65 çулти колхозник хорта йурлат̆

Шемшер йалсоветĕнчи (Шупашкар р.) „Çурлапа мăлатук" колхозра иртнĕ çул хор кружокĕпе хĕлĕхлĕ оркестр организациленĕ. Хор кружокĕнче 27 хĕрарăм, 5 арçын. Вĕсен хушшинче 65 çулхи Кондрати Трофимăв колхозник те пур. Хор çулталăк хушшинче чылай çĕнĕ йурăсем вĕренчĕ.

Трофимăв ĕлĕк чухăн пурăннă, йаланах кулаксемшĕн ĕçленĕ. Унчухне вăл хурлăхлă йурăсем йурласа чунне пусарнă.

— Епĕ хаԓ савăнсах йурлатăп, çĕнĕ, телейлĕ те хаваслă пурнăç мана çĕнĕ вăйхал пачĕ, — тет вăл хорта йурланă чухне.

Трофимăв вăтă пулин те хастарлă ĕçлет. Иртнĕ çулта пĕччене 118 пăт тĕштырă ĕçлесе илчĕ.

В. Захарăв.

Майăн малтанхи числисенче Мускавра „XX лет РККА" выставкă уçăлат̆. Халĕ выставкăра картинăсене çакса тухас ĕç пырат̆.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕн И. И. Бродскин картинĕ: „Оборонă Халăх Комиссарĕ К. Е. Ворошилăв йĕлтĕрпе уçăлса çӳрет".

Ф. Кислов репродукцийĕ (Союзфото).

Епĕ командир пулатăп

Хĕрлĕ Çар ретне киличчен колхозра ĕçлерĕм. Епĕ колхозри стахановец пулнă. Тăрăшса ĕçленĕшĕн 3 хут преми илтĕм, кайран мана колхоз правлени членне суйларĕç.

1937 çулхи кĕркуннене хамăн пурнăçри чи савăнăçлă вăхăт, тесе шутлатăп. Çак кĕркунне хам ĕмĕте пурнăça кĕртрĕм, мана Хĕрлĕ Çар ретне йышăнчĕç. Хĕрлĕ Çар маншăн пысăк шкул пулса тăчĕ. Кунта епĕр вăйлă çар техникине çĕнсе илнипе пĕрлех, культурă тата политикă тĕлĕшĕпе те ӳссе пыратпăр.

Халĕ епĕ кĕçĕн командирсем хатĕрлекен шкулта вĕренетĕп. Манăн ĕмĕт — хамăрăн тăван Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командирĕ пуласси. Командир пулма ăнăçлăн вĕренетĕп. Караулнăй службăра „отлично" тăнăшăн взвод командирĕ тав турĕ.

Епĕ халĕ хамăн пĕтĕм вăйпа пултарулăхпа кĕçĕн командирсем хатĕрлекен шкултан „отлично" паллăпа вĕренсе тухас çĕре хуратăп.

Курсант **М. Виктăрăв.**

Чăваш ачисем — матур красноармейĕцсем

Епĕ йертсе пыракан ротăри чăваш ачисем çар ĕçне тата политикăна ăнăçлăн вĕренсе пыраççĕ. Вĕсенчен пĕри — Шăхасан районĕнчен килнĕ Василий Йеристăв. Вăл Хĕрлĕ Çар ĕретне килсенех вырăсла калаçма лайăх пĕлейместчĕ. Хăшпĕр ăнланман сăмахсене чăвашла куçарса ăнлантараттăм. Халĕ вăл вырăс чĕлхине лайăх вĕренме пуçларĕ.

Хăватлăн ӳссе пырат̆ Йеристăв красноармеец. Вăл ротăри чи малта пыракан красноармеец-стахановец. Пур предметсемпе те „хорошо" тата „отлично" вĕренсе пырат̆. Хăй çумне çирĕплетнĕ машинăпа пĕлсе усă курат̆, тирпейлĕн тыткалат̆. Манăн ротăри Йеристăв пĕр асăрхатару та илмен, ăна командовани йаланах тав тăват̆. Чаçри хĕрлĕ хăма çине те кĕртнĕ Йеристăв бойеца. Унăн сăнне округри хĕрлĕ хăма çине кăларнă.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йатпа ăна 75 теңкĕ преми пачĕç. Ун чухне епĕ хам та 120 тенкĕ преми илтĕм.

Красноармеецсем кĕнеке, хаçат-журнал нумай вулаççĕ. Хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстерсех пыраççĕ. Йеристăв уйрăмăнах Чăваш республикин пурнăçĕпе интересленет. Вăл пĕрмайах „Чăваш Коммунĕ" хаçата çырăнса илсе вулат̆. Вырăсла хаçат-журналсене те нумай вулат̆ вăл. Халĕ вăл комсомола кĕме хатĕрленсе çитрĕ.

Пирĕн ротăра красноармеец стахановецсем, çар ĕçĕн отличникĕсем нумай. Вĕсем хушшинче иртнĕ кĕркунне Хĕрлĕ Çара килнисем те пур. Вĕсем Майăн 1-мĕшĕнче тăван çĕршыв умĕнче хĕрлĕ присăга пачĕç.

Хĕрлĕ Çарăн №-лĕ чаçĕнчи лейтенант **Çмирнов.**

Стахановла йухăм вăйлансах пырат̆

Социалисăмла ăмăртăва анлăн сарнипе чылай предприйатисем апреԓ уйăхне лайăх ĕçлерĕç. Рабочисем хушшинче стахановецсен йышĕ ӳсрĕ.

Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ çумĕнчи Деткомиççи пĕрлешĕвĕн хапрăкĕсемпе савăчĕсем апреԓ уйăх планне 150 процент тултарчĕç. Деткомиççин Çĕмĕрлери хапрăкĕ (директăрĕ Старухин йулташ) I-мĕш квартăл планне 98 процент кăна тултарнă пулсан, апреԓ уйăх планне 140 процент тултарчĕ. Çакăн пекех Сĕнтĕрвăрринчи катка-пичке тăвакан хапрăк (директăрĕ Лукин йулташ) 146,3 процент, Мыслеçри хăма çуракан савăт 118,2 процент пурнăçланă.

Плана тултарассипе Шупашкарти хапрăк уйрăмăнах лайăх ĕçленине палăртмала. Хапрăк апреԓ уйăх планне 179,8 процент тултарчĕ. Малта пыракан çăмата йăвалакан цех (цех начаԓникĕ Морушкин) плана 194,03 процент тултарчĕ. Ку хапрăкра цехпа цех, бригадăпа бригадă тата уйрăм рабочисем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Уйрăм стахановецсем: Куçмин, Долгорукăвă, Болдырĕвă, Петров, Çмирнов, Спирин, Федоçейĕв йулташсем апреԓ уйăхĕнче нумай лайăхрах ĕçлерĕç.

Хаԓхи вăхăтра хапрăксемпе савăтсенче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси хĕрулĕн пырат̆. Кашни рабочи суйлав кунне çĕнĕ çĕнтерӳсем тупипе кĕтсе илессишĕн кĕрешет. Шупашкарти хапрăкра РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренессипе 6 кружок ĕçлет. Кружоксем заняатисене йĕркелĕн иртереççĕ, пайанхи куна кружоксенче пĕтĕмпе 30 занятия туса иртернĕ.

А. Суворăв.

Пысăк ăнăçлăхпа

Елĕк. Шемшеш йалсоветне кĕрекен колхозсем çураки ĕçне пысăк ăнăçлăхпа иртерсе пыраççĕ. Агротехникă ĕçĕсене аван пурнăçлаççĕ.

Колхоз членĕсем хăйсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлерĕç. Вĕсем тăрăшса ĕçленипе Туçи Шемшешри „Прожектăр" колхоза 4 хуçалăх, „Заря коммунизма" колхоза 4 хуçалăх, „Çĕнĕ çĕнтерӳ" колхоза 5 хуçалăх çĕнĕрен хутшăннă.

Т. Йершов.

Займ облигацийĕсене алла илеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Апрелĕн 25-мĕшĕнче „Боԓшевик" савăтра ĕçлекенсем иртнĕ çулта çырăннă „ССРС оборонине тĕреклетмели займ" облигацисене илме пуçларĕç. Пĕр кун хушшинчех пĕтĕмпе 30 пин тенкĕлĕх облигацисем салатса панă. Хапрăк-савăт шкулĕнче вĕренекенсем облигацисене 100 процентпах илнĕ.

Илнĕ обйазательствăна пурнăçларăм

Епĕ иртнĕ çулхи декабĕр уйăхĕнче Çĕмĕрле предприйатисенчи стахановецсен канашлăвĕнче куллени нормăна 500 процент тултарса ĕçлеме обйазательствă илтĕм. Анчах кӳренмеле пулчĕ. Ĕçре çитменлĕхсем пулса пынă пирки хамăн обйазательствăна вăхăтра пурнăçлама май килмерĕ. Манăн ĕçе чылах вăхăт хушши детаԓсене вăхăтра тата çителĕксĕр парса тăни чăрмантарса пычĕ. Инструментсем йусавлă пулманни те лайăх ĕçлеме чăрмантарса пычĕ.

Кăтартнă çитменлĕхсенĕ пĕтернĕ хыççăн манăн ĕç чылайах малала кайма пуçларĕ. Апрелĕн 8-мĕшĕнче епĕ рекордлă ӳсĕм турăм. Вăл кун епĕ нормăна 557 процент тултартăм. Калас пулат̆, ку кун манăн станок лайăх ĕçлерĕ, мĕн чухлĕ ĕçлеме пултарнă таранах унпа усă курнă, вăхăта пĕр минут та ахаль ирттермен. Çитменне тата материалсемшĕн те таçта кайса çӳремен, подручнăйсем пулнă.

Çакăн хыççăн епĕ пĕр иккĕленмесĕрех çакна калама пултаратăп: тунă çитĕнӳ, вăл виçе мар, унтан татах та лайăхрах ĕçлеме пулат̆, условисем туса пани çех кирлĕ.

Халĕ манăн та лайăхрах ĕçлес килет, тунă ӳсĕмпе лăпланса лармастăп. Малашне татах та маттуртарах ĕçлеме тăрăшатăп. Хамăн стахановла меслете ытти рабочисем хушшинче сарса пырса, вĕсене те çавăн пек тухăçлă ĕçлеме пулăшса пыратăп.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи стахановка-торцовщица —

В. Касйанăвă.

Социалисăмла ăмăрту тивлечĕ

Социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма сарса йанă май иртнĕ çулта Чăвашпромсойуз çистемине кĕрекен промысла ертелсем чылай пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Чаканарти промысла ертелĕнче (Ишлей р.) ĕçлекен Сергей Наумăв йулташ кăçалхи çул Вăтам Бакăшри промысла ертелĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р.) Михаил Коротков стахановецпа ăмăртăва тухнă. Ăмăрту договăрĕ тăрăх çулталăк хушшинче унăн 3.670 штук чăпта çапса кăлармала, 2—3-мĕш сурлă чăптасем тăвассине пĕтермеле, пахалăх йенчен отличнă тата 1-мĕш суртлине çапмала, ĕç вырăнне таса тытмала, курăса перекетлемеле. Кунсăр пуçне тата „ГТО" значок нормине памала, политзанятисене йĕркелĕ çӳресе пĕлĕве ӳстермеле.

Хăйсем çине илнĕ обйазательствăна вĕсем ăнăçлăнах пурнăçласа пыраççĕ. Наумăв йулташ кашни кун 23—25 штук чăпта çапса кăларса нормăна 180—220 процентшар тултарат̆. Çав вăхăтрах политкружока вĕренме çӳрет, унта лайăх вĕренет. Кăçалхи çул вăл художествăлă произведенисем те сахал мар вуласа тухрĕ, килте хăйĕн библиотекă пур.

Коротков йулташ та Наумăвран йулмаст̆. Вăл нормăна 200 процентран кайа тултармаст̆, чăпта пахалăхĕ аван. Пĕрремĕш квартал планне 125 процент тултарнă.

Ăмăрту мĕнле сарăлса пынине кăтартакан çавăн пек ырă примерсем ытти ертелсенче те сахал мар. Сăмахран, Кĕçĕн Йангилдина ертел членĕ (Ишлей р.) Петр Çтепанăв йулташ 1-мĕш квартăл планне 181 процент, Канашри „Майăн 1-мĕшĕ" ертел членĕ Иван Царегородцĕв йулташ 281 процент, Николай Андрейĕв—241, Андрей Блинов—240 процент тултарнă.

Анчах çакна каламала: чылай ертелсенче стахановецсен паха опычĕсене сарассипе, вĕсене татах та лайăхрах услови туса парассипе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çавна май ăмăртăва сарса йарасси те çителĕксĕр пулса пырат̆. Хуçайственниксен социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăма сарса йарас ĕçре хăйсен малта пымала, стахановла ĕçлеме майсем туса памала.

Н. Йашков.

Стахановка Нина

Нина Федăрăвă Куславкка комбинатĕнче 1933-мĕш çултанпа ĕçлет. Унччен хапрăк-савăт шкулĕнче вĕреннĕ, станок çинче ĕçлеме специаԓнăç илнĕ.

Çак вăхăт хушшинче Нина чылай малала кайрĕ, техникăна алла çавăрса илчĕ. Вăл станокăн пур пайĕсене те, станок мĕнле ĕçленине тĕплĕн пĕлет. Ĕç вырăнне таса тытат̆, станок патĕнче йăваçсем, çуп-çап купаланса выртнине нихçан та кураймăн.

Çапла ĕçленипе Федăрăвă йулташ нормăна 350 процент таран тултарса ĕçлеме пуçларĕ. Унăн ĕç укçийĕ те 350—370 тенкĕ çитрĕ.

Федăрăвă йулташ А. Сорокинă йулташпа ăмăртат̆. Ăмăртура Федăрăвă малта пырат̆.

— Епĕ хамăн ĕç нормине йаланах 300—350 процент тултарса ĕçлемеле. Анчах пирĕн час-часах материалсем çитмеççĕ, çавна пула станоксене чарса лартса, материалсем çĕклеме кайма лекет, — тет Федăрăвă йулташ.

М. Корнилăв.

Пĕртаннисем хушшинчи пĕрремĕшĕ

Российă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикăн политикăлă-административлă картти çине пăхсан, ирĕксĕрех унăн государствă йĕрки пит те çыхланчăклă пек туйăнса кайат̆. Вунçичĕ автономлă республикă...ултă автономлă облăç... Пилĕк край... çирĕм çичĕ облăç... Вуникĕ нацилĕ округ... Çавăнпа пĕрлех, çакăнта хăйĕн ăслалăхĕпе аслă принцип тăрат̆ — çак пысăк çĕршывра пурăнакан халăхсем пурте пĕртан правапа усă кураççĕ.

РСФСР — Совет Сойузĕнчи чи пысăк тата нумай халăхлă республикă. Унăн çĕрĕсем Белоруççинчен пуçласа Лăпкă тинĕс хĕррине çитеççĕ, çутçанталăкăн икĕ пайне — Йевропăпа Азин пысăк пайне йышăнаççĕ, пирĕн государствăн пилĕк пайĕнчен тăвата пайне йахăн йышăнса тăраççĕ. ССР Сойузĕн халăхĕн виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ РСФСР-че пурăнат̆.

РСФСР-ăн вунпĕр сойузлă республикă çеминчи вырăнĕ унăн территорийĕ пысăк пулнинче, халăх нумай пурăннинче кăна мар: Российă федерацийĕ — Совет Сойузĕн економикă тĕлĕшĕнчен пуринчен ытларах хăватлă, çĕр [illegible]ĕнчи пысăк пуйанлăхлă пайĕ. ССР Сойузĕн пĕтĕм кăмрăк запасĕн вунă пайĕнчен тăхăр пайĕ, тимĕр-тăмăр запасĕн пилĕк пайĕнчен тăвата пайĕ, електровăйăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ, Совет Сойузĕнче кăларакан машинăсен хисепĕнчен виçĕ чĕрекĕ РСФСР-че. Çаксем пулаççĕ ĕнтĕ, вырăс халăх республикĕн индустрилĕ хăватне кăтартакан паллăсем. РСФСР-н çĕрĕçĕ те пуйан. ССР Сойузĕн тырпул балансĕнче вăл пĕрремĕш вырăнта тăрат̆.

Хамăрăн тăван çĕршывăн оборонинче РСФСР пит те пысăк вырăнта тăрат̆. Унăн çыранĕсенче Совет Сойузĕн 4 тинĕс-çар флочĕ тăрат̆. Хĕвелтухăçĕнче унăн çĕрĕсем фашисла йапонипе йунашар, çурçĕрпе-хĕвеланăçĕнче Ленин хули — социалисăмла революцин сăпки, Балтий тинĕсĕн çыранĕсен шанчăклă оборони.

Пирĕн социалисăмла государствăн политикăлă пурнăçĕнче РСФСР вырăнĕпе роԓне палăртса тăраканни вăл — Российă республикинче пурăнакан халăхсен йышне аслă вырăс халăхĕ кĕни пулат̆, çав халăха пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем йуратаççĕ, ăна хисеплеççĕ. Вырăс халăхĕ пулăшнипе ĕлĕк патша правителстви пусмăрĕ айĕнче пурăннă темĕн чухлĕ халăх ирĕке тухрĕ. Российри рабочисемпе хресченсем пулăшнипе Совет Сойузĕнчи ытти халăхсем хăйсем хуçалăхпа куԓтурă тĕлĕшĕнчен кайа йулнине пĕтерчĕç, социалисăм турĕç, телейлĕ те ирĕклĕ пурнăçпа пурăнма тытăнчĕç. Хамăрăн аслă тăван çĕршыв картти çине пăхсан, вырăс халăхĕ пулăшнипе миçе наци ирĕке тухнине пĕлме пулат̆. Картă çине пăхсан боԓшевиксен партин ленинла-сталинла наци политикин пысăклăхне курса чухлама пулат̆.

Таджикистанпа Туркменистанри малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсене йышăннă чухне Сталин йулташ каланă: „1937 çулти Октйабĕрте, пирте пролетарилĕ аслă революци сарăлса кайнă чухне, епĕр патшана, помещиксене, капиталиссене çĕмĕрсе тăкнă чухне, аслă Ленин, пирĕн учител, пирĕн атте, пире пăхса çитĕнтерекен: çак вăхăтран пуçласа пуç пулса тăракан наци те, пăхăнса тăракан наци те çук, халăхсем пĕртан, тата ирĕклĕ пулмала, тесе каланă. Çавăнпа вăл патшан кивĕ буржуалă политикине тупăка хурса çĕр айне турĕ, çĕнĕ, боԓшевикла политикă — пирĕн çĕршыври халăхсем хушшинчи туслăх политикине турĕ".

Çакнашкал туслăхăн, халăхсен чăн-чăн туслăхĕн тĕслĕхĕ РСФСР пулса тăрат̆. Унта вуншар наци пурăнат̆. Пĕр Инçет Хĕвелтухăç крайĕнче кăна 80 наци пурăнат̆. Вĕсем пурте вырăс халăхне — ленинла-сталинла наци политикин принципне çирĕп тытса пыракан халăха — чĕререн йуратаççĕ, унăн революцилĕ традицине хисеплеççĕ, унăн пуйан культурине питĕ хытă хаклаççĕ, вырăс халăхĕ тăшмансене хирĕç кĕрешсе, тунă опытпа усă кураççĕ, социалисăм строителстви валли пĕлӳ илеççĕ.

Фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă националисла агенчĕсем ĕлĕк пусмăрта пурăннă халăхсем йенчĕн вырăс халăхне шанса, ĕненсе тăрассине хавшатма хăтланнă. Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блокăн" пуçлăхĕсенчен пĕри, фашис Бухарин Совет халăхĕсем хушшинчи туслăха вăйсăрлатас шутпа, вырăс халăхĕ çинчен „обломовсен нацийĕ" тесе елекленĕ. Елек сарнипе фаԓсификаципе вăл вырăс рабочисемпе хресченĕсем Совет Сойузĕнчи ытти халăхсене ирĕке кăларассишĕн пынă кĕрешӳре мĕнле пысăк вырăнта пулнине пĕчĕклетесшĕн пулнă. Елек сарнипе, фаԓсификаципе вăл Совет Сойузĕнчи пур халăхсем тата тĕнчери пĕтĕм ĕççыннисем вырăс халăхне йуратнине, хисеплепине, унăн авторитетне пĕчĕклетесшĕн пулнă. Çак усал шухăша ĕçе кĕме май килмерĕ. Фашисла бандитăн елекĕ хăйне хирĕç тата йутçĕршыв разведкисене сутăннă унăн бандине хирĕç пулчĕ. Пирĕн тăван çĕршыври халăхсем хушшинчи туслăха никам та пăсма пултараймаст̆. Боԓшевикла революцин йалавне чи малтан çĕкленĕ вырăс халăхĕн авторитечĕ тата мухтавлăхĕ пысăк. Тăшман мĕн чухлĕ иртĕнет, тăшман социалисăма хирĕç мĕн чухлĕ усал майсемпе кĕрешет, совет халăхĕн пĕрлĕхĕ çавăн чухлĕ çирĕпрех, çавăн чухлĕ вырăс халăхне тата ытларах йурату, фашисла разведкăсене пĕтерме ытти халăхсем вырăс халăхĕнчен вĕренесси, коммунисăм обществи тума вĕренесси ӳссе пырат̆.

Халĕ пур сойузлă республикăсем те хăйсен верховнăй органĕсен суйлавĕ умĕнче. Грузи, Армен ССР-сем суйлав кампанине тытăнчĕç. Апрелĕн 26-мĕшĕнче РСФСР-че суйлав кампани пуçланчĕ. Республикăри Тĕп суйлав Комиççине тунă, суйлав округĕсем тăвасси çинчен пичетлесе кăларнă, хыççăн, пĕтĕм халăх сасăлассин практикăлă ĕçĕ пуçланат̆.

Пирĕн çĕршывăн пурнăçĕнче РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕ пит те пысăк ĕç. 1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пурте пĕр çын пек пулса сасăласа, суйлавçăсем хăйсем Ленин—Сталин парти тавра таччăн пĕрлешсе тăнине, совет халăхĕн мораԓлĕ-политикăлă пĕрлĕхне кăтартрĕç. Вĕсем Совет Сойузĕн Верховнăй Советне хамăрăн аслă тăван çĕршывăн тивĕçлĕ ывăл-хĕрĕсене, совет патриочĕсене суйларĕç. РСФСР тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕнчен тата лайăхрах, тата организацилĕрех иртермеле. Партин Сталинла Тĕп Комитечĕн Май уйавне иртерме панă лозунгĕсенче каланă:

„ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем! Сойузлă тата автономлă советлă социалисăмлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене хамăрăн тăван çĕршывăн паттăр патриочĕсене, рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн, социалисăмшăн ним пăрăнмасăр кĕрешекенсене суйлăр!

Ленин—Сталин партийĕ партири тата партире тăман боԓшевиксене, государствăн ленинла деятелĕсене, тăшмансене хирĕç хăйаррăн кĕрешекенсене вĕрентсе çитĕнтерчĕ. Çаксен шутĕнчен чи тивĕçлисене суйласси — суйлав кампанин тĕп задач пулса тăрат̆. Çак задача пурнăçа кĕртнĕ чухне ССР Сойузĕнчи мĕн пур ĕççыннисем социалисăмлă совет республикисен çеминче йертсе пырас вырăнта тăракан вырăс халăхĕнчен пример илет.

„Известия".

Йут ҫĕршывсенчи рабочи делегацисене Профҫойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Советĕнче йышăнни

Майăн 3-мĕшĕнче Мускавра Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совет Президиумĕн тата Сойузсен Тĕп Комитет Председателĕсен ССР Сойузне Май праҫникне уйăвлама килнĕ йут ҫĕршывсенчи рабочи делегацисемпе пĕрле лару пулса иртнĕ.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совет Президиумĕ йачĕпе Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совет секретарĕ Шверник йулташ доклад туса панă. Вăл хăйĕн докладĕнче капиталисăмлă ҫĕршывсенчи пролетариат представителĕсене пирĕн ҫĕршыври социалисăмăн калама ҫук пысăк ҫĕнтерĕвĕсемпе тата совет профсойузĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăнипе паллаштарнă.

Делегатсем профсойузлă пĕрлĕх ҫинчен панă ыйтусене ответлесе, Шверник йулташ вĕсене Мускавра Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совет Профеҫсилĕ сойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн представителĕсем хушшинче пулнă калаҫусем ҫинчен тĕплĕн каласа панă.

Ҫакăн пек калаҫусем хыҫҫăн, совет профсойузĕсен делегацийĕ тата Профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн делегацийĕ вăрҫăпа фашисăма хирĕҫ кĕрешме ССР Сойузĕнчи профсойузсем Профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕне пĕрлех тумали тĕп условисем ҫинчен калаҫса татăлнă.

Анчах та Профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн Ĕҫтăвкомĕ Мускава йанă делагаци отчотне итлесе сӳтсе йавса, совет профсойузĕсен условийĕсене йышăнма май пуррине шута хумасăр хăварнă та, вăл ыйтăва Профсойузсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн Генераљнăй Совечĕн Осло хулинче пухăнакан пулас ҫеҫҫинче пăхса тухса татса памала тунă. Генераљнăй Совета ССР Сойузĕнчи профсойузсем тăратнă условисене йышăнмасăр хăварма хушнă.

(ТАСС).

Фрунзе йачĕпе тăракан савăтри рабочисен Май уйавĕ йачĕпе тунă вечĕрĕ

М. И. Калинин йултăшăн саламлă ҫырăвĕ

Мускаври Фрунзе йачĕпе тăракан савăтри рабочисен, инженерсен, техниксен тата служăшчисен Май уйавĕ йачĕпе тата РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав кампани пуҫланнă йатпа тунă чаплă пуху пысăк хаваслăхпа иртнĕ.

Вечĕра Совет Сойузĕн геройĕсем—Папанинпа Ширшов йулташсем пынă. Пуху вĕсене ăшшăн саламласа кĕтсе илнĕ.

Ширшов йулташ савăт коллективне производствăлă ҫĕнтерӳсем тунăшăн сывлăх сунса саламланă тата чаплă ĕҫлекен паха моторсем туса кăларнăшăн тепĕр хут тав тунă, вăл моторсем партипе правителствă Ҫурҫĕр пољусне ҫĕнсе илме панă заданине пурнăҫа кĕртме пулăшнă.

Герой-ученăй фрунзенцăсене татах та лайăх ĕҫлеме, Совет Сойузĕн оборонă вăй-хăватне ырмиканми ӳстерсе пыма, коммунистсемпе партире тăманнисен блокне ҫирĕплетме чĕннĕ.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин йулташ савăт коллективне чĕререн саламласа ҫыру йанă. М. И. Калинин йулташ фрунзенцăсене пĕтĕм тĕнчĕри пролетарилĕ пĕрлĕх уйавĕ йачĕпе тата суйлав кампани пуҫланнă йатпа сывлăх сунса саламланă.

Калинин йулташ ҫырăвне пуху хĕрӳлĕн кĕтсе илчĕ.

(ТАСС)

Паллă бригадир кĕнеки

Ростов облаҫĕнчи кĕнекесен издателстви Перҫианăври машинă-трактăрлă станцинчи трактăр отрйачĕн бригадирĕ орденоносĕц Семен Бабин ҫырнă брошурăна пичетлесе кăларнă.

1935 ҫулта йалхуҫалăх ĕҫĕнче малта пыракансен Пĕтĕм Сойузри канашлăвĕнче Бабин йулташ хăй бригади йачĕпе Сталин йулташа кашни трактăр пуҫне, ҫемҫе ҫĕре сухалани ҫине куҫарсан, 2000 гектартан кайа мар сухалама сăмах панă. Паллă бригадир хăйĕн сăмахне пурнăҫа кĕртнĕ. 1936 ҫулта унăн бригади кашни трактăр пуҫне 2.150 гектар, 1937 ҫулта 2.163,7 гектар сухаланă.

Бабин йулташ хăйĕн кĕнекинче бригадăри паха ҫынсем ҫинчен каласа парать, ĕҫĕн стахановла метăчĕсене вĕрнтет, Сталинла тырпулшăн, трактăр отрйадĕнчи куљтурăлă ĕҫшĕн йепле кĕрешмелине кăтартать.

(ТАСС).

„Первая конная“

И. В. Сталин тата К. Й. Ворошилăв йулташсем пăхса ӳстернĕ Пĕрремĕш Утлă ҫар ҫамрăк Совет республикĕн тăшманĕсене хирĕҫ рабочисемпе хресченсен хĕҫпăшаллă кĕрешĕвĕн историйĕнче сахал мар чаплă страницăсем ҫырса хунă. Хĕрлĕ утлă ҫарăн паха операцийĕсенчен пĕри 1920 ҫулта, Антантă виҫҫĕмĕш поход тунă вăхăтра пансен Пољшине хирĕҫ Пĕрремĕш Утлă ҫар паттăрла рейд туни пулса тăрать.

„Первая Конная“ йатлă художĕствăлă фиљм ҫак историлĕ рейда кăтартса парать. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫумĕнчи Кинĕмотографи ĕҫĕсен комитечĕ фиљм сценарине писатĕл-орденоносĕца В. С. Вишневскине ҫырма хушнă, постановкăна тума—режиҫсор-орденоносĕца Й. Дзигана хушнă.

(ТАСС).

Май праҫникне Мускавра уйавлани ҫинчен ӳкернĕ фиљм

Май праҫникне Мускавра уйавланине—парада тата демонстрацине—Сойузкинохроникăн Мускаври кино-студийĕн 30 оператăрĕ ӳкернĕ.

Сасла аппаратурăпа Ворошилăв йулташ сăмахне ҫырса илнĕ.

Хĕрлĕ площчĕдри парада, демонстрантсем столицăн ҫĕнĕ кĕперĕсем ҫинчен иртсе пынине, Кремĕл патне малтанхи хут пынă Атăл флотилине кăтартакан кадрсем питĕ интереслă.

Май праҫникне Мускавра уйавлани ҫинчен ӳкернĕ фиљмăсем хатĕр ĕнтĕ.

(ТАСС).

Йамайкă утравĕ ҫинчи пăлханусем

Йамайкă утравĕ ҫинче. (Карайбски тинĕсĕнчи Англи колонийĕ) ҫак кунсенче сахăр плантацийĕсенчи забастовкă тăвакан рабочисене полици йун ăшне тунă. Забастовкă тăвакан рабочисен демонстрацийĕ ҫине полици вунă минут хушши пăшалпа персе тăнă, демонстрацинче хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем те пулнă. Пăшалсемпе пенĕ хыҫҫăн пиллĕк ҫынна вĕлернĕ, 49 ҫынна амантнă. 89 ҫынна арĕслене.

Йамайкă утравĕ ҫинче сиксе тухнă пăлханусен тĕп сăлтавĕсем—рабочисен ĕҫукҫи ытла та пĕчĕкки, хватер условийĕсем ҫав тери йапăххи тата политикăлă правасăрлăх пулса тăраҫҫĕ. Рабочисен пурнăҫĕ мĕн тери начаррине ҫак фактран та курма пулать: пĕр уйăх кайала ҫĕршер ҫынсем хăйсене тĕрмене хупма ыйтнă, ҫапла тунипе вĕсем унта апат-ҫимĕҫ илсе выҫҫа вилесрен ҫăлăнса йуласшăн пулнă.

(ТАСС).

Майăн 20-мĕшĕнче Казахстан йурăҫи, орденоносĕц Джамбул сăвăсем ҫырма пуҫлани 75 ҫул тултарать.

ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Казахстан халăхĕн йурăҫи Джамбул хăйĕн ывăлĕн хĕрĕпе.

Акмолинский фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

ДЖАМБУЛ
Казах халăхĕн йурăҫи-импровизатăр, орденоносĕц

Ачасене чĕнсе йурланă йурă

Ачамсем, сывах-и? Еп хавас!.
Ха, пылхурчĕ пек сĕрлеҫ вĕсем...
Ват Джамбул, кив тăмрине илсе,
Килчĕ сирĕн хӳхĕм уйава
Сирĕнпе хăналанас тесе.

Ватă еп, курпун тĕве пек, ачамсем,
Выљăр кулăр, кăмăлать старик сире.
Есĕр, манăн савнă ывлăмсем,
Чĕчĕ ĕмекен путексемпе пĕрех.

Сирĕншĕн тĕнче хавас, хитре,
Йалкăшса ҫунаҫҫĕ тӳпĕре
Сирĕншĕн ахах пек ҫăлтăрсем,
Ҫар хĕвел савса лăпкать сире,
Пурнăҫ сирĕн йурă пек хитре!..

Сталин—ҫĕр ҫинчи чи пысăк ҫын—
Тăванран та сывăх вăл сире,
Сталин—ҫут хĕвел-вăл, ун ăшши
Пур ҫĕрте те ачашлать сире.

Сталин кăмăлла пур ҫынсенчен,
Вăл сире ĕҫчен хуласенчен,
Савăнăҫлă пурăнчăр тесе,
Йарса пачĕ капăр теттесем,
Букварсем, хитре кĕнекесем.

Аслă Сталин—ĕмĕрхи чинар,
Ҫĕкленет вăл ҫӳлĕ те патвар.
Ҫулсисем ун—ĕнчĕ те мерчен,[1]
Пит аван сире ун хӳттинче.

Сталин сирĕн савнăҫпа пурнать,
Ас-тăн илчĕр, тет, вĕренӳре,
Ҫырăр, вулăр,—кĕнеке сире
Ылттăн уҫăсем парать.

Асăнтах тыт есĕ, пионер—
Сталин пирĕншĕн чи пысăк пример,
Пур аслă ҫынран та аслăрах етем
вăл,
Пур аттесенчен те лайăхрах атте
вăл.

1937.

Н. ЙАНКАС куҫарнă.

[1]) Хаклă йышши чулсем.

Ҫуркунне

Вăрманĕ, улăхĕ, уйхирĕ
Хывайрĕҫ хĕллехи тумне;
Тулта ăш ҫăмăрлă ҫу ирĕ,
Тулта йем-йешĕл ҫуркунне.

Ийунĕн ирĕнчи сат ҫийĕн
Хитреленен ҫеҫкесем пек,
Пайан хавасланать кашнийĕн
Чĕри ҫурхи ĕмĕтсемпе.

Пĕлтĕр акса хăварнă тырă,
Хаљ симĕс куранан ыраш,
Хăмăш пек ӳстĕр, пултăр ырă,
Пĕлтĕрхинчен те тутăрах.

Хаљ акăнан пĕрчĕ сар тулĕ,
Кăп-кăпăш ҫĕр ҫине шăтса,
Кашлатăр—ӳстĕр, пултăр тулăх,
Пĕлтĕрхинчен-виҫĕ хут ăнса.

Епĕр лартса ӳстернĕ сатăн
Матур хĕр пичĕ пек улми
Шап-шурăн курăнтăр, туратăн
Ҫавра ҫулҫи те палăрми.

Ҫаран ҫинче йĕшĕртĕр ута
Пĕлтĕрхинчен те ҫăрарах—
Епĕр усрана выљăх тутă
Хĕл каҫтăр ăшă картара.

Ҫурхи илем куҫа савсассăн,
Чуна ҫу шавĕ иленсен,
Ҫак ĕмĕтпе пайан хавассăн
Тытатпăр кăмăлла ĕҫсем.

Александр Алка.

И. Молăдăв ҫинчен ҫырни тĕрĕс мар

Кăҫалхи йанварĕн 15-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ“ хаҫатра „Артист“ псевдонимлă автăрăн „Кутăн йе ăнланман пуҫлăх“ йатлă статйи пичетленсе тухнă. Автăр ҫак статйара Чăваш республикĕнчи искусствă ĕҫĕсен управленийĕн начаљникĕ Г. Ивановăн ҫитменлĕхĕсене критĕкленĕ хушăра И. Молăдăв артисăн йатне те тĕртсе илет. Вăл ăна „кулак ывăлĕ, халăх тăшманĕ Кошкинскипе пĕр каварлă пулса ĕҫленĕ“,—тет. Паллах, Молăдăв йулташа ҫапла калама нимĕнле сăлтав та ҫук. Йелчĕк йалсовечĕ (ҫав районах) ҫырса пĕлтернĕ тăрăх, И. Молăдăв йулташăн ашшĕ те, аслăшшĕ те кулак пулман, вăл Кошкинскипе пĕр каварлă пулса ĕҫленĕ тени те тĕрĕс мар. И. Молăдăв артис пирки статйа автăрĕ пĕтĕмпех суйа, елеклес шутпа ҫеҫ ҫырнă. Ку статйана тĕплĕн тĕрĕслемесĕр пичетре кăларса хаҫат редакцийĕ те пысăк йăнăш тунă.

В. М. ГАРШИН ПИСАТĔЛĔН ЙАПАЛИСЕНЕ МУЗЕЙА ПАНА

Нумайах пулмасть Гаршин писатĕлĕн пиччĕшĕн ывăлĕ В. Г. Гаршин Аслăлăхсен Академин литературă институчĕ ҫумĕнчи музейа Гаршин писатĕлĕн йапалисене панă, сăмахран В. М. Гаршинăн 128-мĕш Болховский полкра службăра тăнă вăхăтри картусне, писатĕл ҫырăвĕсене, „То, чего не было“ йатлă йумахăн алҫырăвне панă. Ку йапаласем пурте литературă музейĕнче пулаҫҫĕ.

Гаршин писатĕл арăмĕ Нафусдă Махайлăвнă хаљ те Ленинградра учонăйсен ҫуртĕнче пурăнать, вăл Гаршин пурнăҫĕ ҫинчен нумай сведĕнисем каласа парать.

Ленинград.

Чăваш литературин вечĕрĕ

Шупашкарти Хресчен ҫуртĕнче майăн 4-мĕшĕнче чăваш литератăрĕсен вечĕрĕ пулса иртрĕ.

Вечĕр программи пуҫланас умĕн Уйăп Мишши йулташ йулашки вăхăтра пирĕн литератăрсем мĕнле ҫĕнĕ произведенисем ҫинче ĕҫлени ҫинчен кĕске сăмах тухса каларĕ. Ун хыҫҫăн трибунă ҫине Н. И. Шелепи поет тухрĕ: Верховнăй Совет суйлавĕ умĕн ҫырнă хăйĕн „ылттăн саспаллипе“ сăввине вăл пысăк хавхаланупа вуласа пачĕ.

Итлесе ларакансем, уйрăмăнах, Иван Мучи тухса вуланă „Ҫурхи калавсене“ питĕ килĕштерчĕҫ. Савăнăҫлă кулă, вичкĕн сатирă. Унăн калавĕсенче хамăрăн пурнаҫпа йăлари кăлтăксене, ҫитменлĕхсене куратăн, ҫавăнтах ҫав ҫитменлĕхсене мĕнле пĕтермели майсене тупатăн.

Поетсенчен Уйăп Мишши, Ухсай, Ĕҫхĕл, Усли, Ивник тата ыттисем те хăйсен сăввисене вуласа пачĕҫ. Калас пулать, вĕсенчен чылайĕшĕ иртнĕ ҫулсенче ҫырнă, хаҫат-журналсенче пичетленнĕ, вулакансене тахҫанах паллă сăвăсемпе тухрĕҫ. Ҫĕнĕ сăвăсем, тематикă тĕлĕшĕнчен сарлакарах та тарăнрах шухăшлă сăвăсем кĕтнĕччĕ вечĕра пуҫтарăнна халăх. Ҫапах пирĕн поетсен пултарулăхĕ кунсеренех вăй илсе пынине вĕсем малала пысăк шанчăк пани ҫак вечĕрта уҫăмлăнах курăнчĕ. Йулашки ҫулсенче палăрма пуҫланă ҫамрăк поетсем те (Алка, Зинă Митрофанăвă, Йастран, Малкай) вечĕрта самайах аван сăвăсем вуласа пачĕҫ. Ҫавăн пекех ватă сăвăҫ-калавҫă Скорикăв-Мая вуласа панă „Аслă Сталин ĕмĕрĕнче“ йатлă сăва вечĕра пухăннисене килĕшрĕ.

Ҫитес вăхăтрах пирĕн аслă ҫĕршыв Казахстан халăхĕн аслă йурăҫи Джамбулăн йубилейне уйавлать. Ҫак чаплă йубилей тĕлне пирĕн литератăрсем те хатĕрленеҫҫĕ. Джамбулăн вилĕмсĕр йурри-сăввисене чăвашла куҫарас тĕлĕшпе Илле Тукташ, Нестĕр Йанкас, Митта Петĕрĕ йулташсем чылай ĕҫлерĕҫ. Вĕсем куҫарнă Джамбул сăввисене Чăвашиздат ҫитес кунсенчех кĕнеке туса кăларать. Вечĕрта Митта Петĕрĕпе Ник. Дедушкин йулташсем Джамбулăн икĕ сăввине вуласа пачĕҫ.

Йулашкинчен Чăваш Государствă Филармонийĕн артисĕсем тĕрлĕрен йурăсем йурласа, ташă кĕввисем выљаса пачĕҫ.

Арк. Нестĕрăв.

Футбол

Горький—Шупашкар 2:2

Майăн 1-мĕшĕнче каҫхине 6 сехетре „Темп“ общчĕствин стадионĕнче Горькири „Строитĕл“ командипе Шупашкарти „Темп“ командин йулташла футбол матчĕ пулса иртрĕ. Вăйа 2:2 хисеппе никам ҫĕнтерейменнипе пĕтрĕ. Ҫак командăсемех иртнĕ ҫул тĕл пулса выљанă чухне 1:0 шутпа Шупашкарти „Темп“ команди ҫĕнтернĕччĕ.

Каҫал „Темп“ команди кăшт начартарах выљарĕ. Филиппăвсăр пуҫне пурте ҫĕнĕ ҫынсем. Вĕсем пĕрне пĕри пĕлсе тасовкăпа выљамарĕҫ. Зашчитăри Платуновпа Михайлăв аван выљарĕҫ.

Ҫĕнĕ вратар Зайцĕв, иртнĕ ҫул „Спартак“-шăн выљанăскер, хăйĕн пултарулăхне аван кăтартрĕ.

Ф. Каратайĕв.

Темпăвцăсем ҫĕнтерчĕҫ

Майăн 4-мĕшĕнче „Темп“ спорт общчĕствин 1-мĕш командипе хулари сборнăй командă футболла выљарĕҫ. Иккĕмĕш таймра „Темп“ команди вăййа хăй йенне илчĕ. Малтанхи минутсенчех сборнăй командă алăкне пĕрремĕш мечкă кĕртрĕ. Иккĕмĕш таймăн ҫурринче „Темп“ команди сборнăй командă алăкне иккĕмĕш мечкă тапса кĕртрĕ. Вăйă 2:0 шутпа „Темп“ команди ҫĕнтернипе пĕтрĕ.

Лиҫичкина таварсене салатнăшăн суда панă

Чебторгăн Канаш хулинче ĕҫленĕ агĕнт-експедитăрĕ Лиҫичкин промышлĕннăҫ таварĕсене сутса ĕҫсе тата вҫаткă парса пурăннă. Ҫапла вăл кăсйе сехечĕ 9 штук, 21 мăшăр калуш, хĕрарăм ботисĕм 2 мăшăр—921 т. 90 пуслăх, пљуш, фланељ, ситцă—263 тенкĕлĕх салатса йанă. Чăваш АССР Суту-илу Халăх Комиссарĕн—Ваструк йултăшăн приказĕ тăрăх Лиҫичкина ĕҫрен кăларнă тата суда панă.

Чебторг директăрĕ Братчикăв тата унăн замеҫтителĕ Астахăв пĕлнĕ пулсан та Лиҫичкинăн сиенлĕ ĕҫне пĕтермен (Лиҫачкинран тавар выранне укҫан илме ирĕк панă). Вĕсене Ваструк йулташ: ҫавăн пеккине татах палăртсан айăпламала пулать, тесе асăрхаттарнă.

Хроникă

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Й. Г. Йевдокимăв йулташа Шыв транспăрчĕн Халăх Комиссарĕсен замеҫтителĕ пулма ҫирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Извещение

на заседание Бюро Чуваш. Обкома ВЛКСМ к 10-ти часам утра на 9-е мая 1938 г. в г. Чебоксары (улица Карла Маркса дом № 15) для участия в разборе апелляций ВЫЗЫВАЮТСЯ:

По Ибресинскому району:
1. Ильин Михаил Захарович
2. Ивалов Павел Иванович
3. Самаркин Николай В.

По Ядринскому району:
4. Кузьмин Герасим К.
5. Васильев Исай В.
6. Токарев Степан А.
7. Абакумов Валентин М.
8. Давыдов Евгений К.

По Ишлейскому району:
9. Васильев Спиридон В.
10. Рыков Порфирий Т.

По Канашскому району:
11. Семенов Егор С.

По Шихирданскому району:
12. Избетов Хайрула
13. Семерханов Гадельзан
14. Сунгатуллин Ахат

По Батыревскому району:
15. Борцев Павел
16. Павлов Владимир

По Шемуршинскому району:
17. Ерупов Димитрий
18. Салмин Михаил
19. Фролов Иван
20. Крылова Глафирия

По Урмарскому району:
21. Борков Егор И.

По Цивильскому району:
22. Васильев Илларион
23. Денисов Павел Д.
24. Иванова Нина

Райкомы ВЛКСМ должны выслать своих представителей и обеспечить обязательную явку вызываемых лиц к указанному сроку.

Обком ВЛКСМ.

Ответлă редактăр Н. М СЕМЕНАВ.

Шупашкарти „Красный мебељщчик“ ертелне

стољарсем, платниксем, станочниксем, рабочисем тата ку ĕҫсене вĕренме ачасем

КИРЛĔ

Адрĕс: Ворошилăв урамĕ, 26.

„Спотара“ Чăваш кантурне

Бухгалтĕр-ревизор
Счетовод-картотетчик

КИРЛĔ

Адрĕс: Шупашкар, Красноармейски урамĕ, 5.

Академи театрĕнче

Майăн 6-мĕшĕнче

Вырăсла ҫпектакаљ

Л. Н. ТОЛСТОЙ

АННА КАРЕНИНА

Аслă режиҫсор
Г. В. Странский лартать.

Художник
Й. Н. Сапожникăв.

Талон № 184.

Абонемент № 9, талон № 17.

ЙМПЕРИАЛИСĂМЛĂ ЙАПОНИРЕ

1938 ҫулăн малтанхи уйăхĕсем Йапони хулисемпе йалĕсенчи ĕҫсыннисен пурнăҫĕ ҫĕнĕрен йăвăрланнипе палăрса тăраҫҫĕ. Китай халăхне хирĕҫ вăрҫă пуҫарса йапăранна 10 уйăх хушшинче Йапони империалисĕсем 1.500.000 ҫынна пăшал тыттарчĕҫ. Китайри вăрҫăпа ҫыхăнса тăракан расхутсем Йапонин унччĕнех тĕрексĕр пулнă финанспа економикăлă никĕсне кунсерен хавшатса пыраҫҫĕ. Малтан кăларнă зайомсемпе пĕрле илсе шутласан, шалти зайомсем тăрăх кивҫене кĕнин пĕтĕм хисепĕ 1938—1939 ҫулти буджет ҫулĕ вĕҫне 18—19 мĕлйард ийен шутланать.

Вăрҫă расхучĕсен пĕтĕм йăвăрлăхĕ хуласемпе йалсенчи ĕҫсыннисем ҫине тийенет. 1936 ҫулта пĕр йапонĕҫран 7 ийен та 12 сен, 1937 ҫулта—10 ийен та 92 сен тӳрĕ налог илнĕ пулсан, 1938 ҫулта вара вăл налог 15 ийен та 27 сена ҫитнĕ. Урăх майсемпе илекен налогсем 1936 ҫулта пĕр ҫын пуҫне 10 ийен та 50 сен шулнă шулсан, 1938 ҫулта—13 ийен та 29 сена ҫитнĕ.

Ҫаксем ĕнтĕ пурте рабочисемпе хресченсен пурнăҫне ҫав тери йăвăрлатнă. Саккунпа ҫирĕплетнĕ тăрăх промышлĕннăҫра кун каҫаччен 12 сехет, кирлĕ вăхăтра—14 сехет ĕҫлемеле тунă. Чăннипе илсен вăрҫă предприйатийĕсенче кунне 14—16 сехет ĕҫлеттереҫҫĕ. Ĕҫ укҫине чакарни, тумтирсен тата симĕҫ продуктисен хакĕ ӳсни Йапони рабочийĕн ҫемйи пурнăҫне татах та йăвăрлатнă. Иртнĕ ҫулхи ийуљ уйăхĕнчипе танлаштарсан, пурнăҫ хакĕ 30 процент ӳснĕ.

Йалта ĕҫ вăйĕ ҫитмест.

Йапони хресченĕсем помещиксене пысăккăн парăма кĕнĕ пирки, хресченсем хăйсен йулашки ҫĕрĕсене массăлăн сутаҫҫĕ. Удобренисен хакĕ, пуринчен ытла суперфосфатпа кукĕрт-йуҫĕкĕ аммони хакĕ 50 процент ӳснĕ. Йалхуҫалăхĕнчи ĕҫ хатĕрĕсен хакĕ 40 проц. хăпарнă.

Йапонинчи халăх массисем хушшине „хăрушă шухăшсем“ кĕрсе кайасран хăраса, правителствă репреҫҫисем туса иртерет. Мĕн пур ҫар предприйатийĕсенче профсойузсене салатса йарса вĕсене организацилеме чарнă, ҫавăн пекех еҫлахăй профсойузсене. Йапонири рабочи тата хресчĕн партийĕсене салатса йарса ĕҫлеме чарнă. Иртнĕ ҫулăн вĕҫĕнче рабочисемпе хресченсен тата ытти организацисен руководителĕсене 400 ҫынна арĕслене.

ҪИТАЙРИ ФРОНТСЕНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

Пĕр уйăх кайала Ҫуйчжоу ҫине тапăнса пыракан Йапонин икĕ дивизине Тайерчжуан районĕнче (Шаљдун провинцин кăнтăрти пайĕ) Китай ҫарĕсем ҫĕмĕрсе тăкнă. Анчах та ҫакăн пек ҫухату тӳснĕ хыҫҫăн та Йапони командованийĕ Ҫуйчжоу ҫине тапăнас илана прахăҫа кăларман. Ҫуйчжоу вăл Лунхай тата Ҭаљцзин—Пукоу чукунҫулĕсем пĕр-пĕринпе хĕресленсе куҫса кайнă ҫĕрте стратеги тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăракан пункт шутланать. Икĕ ерне кайала, Шаљдун провинцин кăнтăрти пайне васкасах 150 пин таран ҫарсам тата артиллери, танксем, самолотсем илсе пырса, йапонĕцсем хĕвелтухăҫпе хĕвеланăҫ йенчен ҫавăрăнса пырса Ҫуйчжоу ҫине ҫĕнĕрен тапăнма пуҫланă.

Хĕвелтухăҫ йенчен тапăнса пыракан ҫарсем Йапони чаҫĕсен йулăшкийĕсене—китайĕцсем Иҫаљ хулине хупăрласа илнĕ чаҫсен йулашкийĕсене ирĕке кăларнă та, Ичжоу хулине йышăннă (Иҫаљрен хĕвелтухăҫнеле). Ултă кун хушши ҫапăҫнă хыҫҫăн, апрелĕн 25-мĕшĕнче йапонĕцсем Таљчен йатлă уйĕс хулине туртса илнĕ. Хаљхи вăхăтра ҫапăҫусем Таљчен таврашĕнче пулса пыраҫҫĕ. Малала тапăнса пыраССине чарса лартнă та, ҫак районра Китай ҫарĕсем йапонĕцсем ҫине татти-сыпписĕр атакă тăваҫҫĕ.

Йапонĕцсем Ҫуйчжоуна хĕвеланăҫ йенчен пырса ҫавăрса илме хăтланса пăхни ăнăҫусăр пулнă. Апрелĕн 29-мĕшĕнче Наљйанчен йатлă пысăк мар хулана (Цзинанрен кăнтăрала) йышăннă та, Йапони ҫарĕсем малала куҫма пултарайман.

Кăнтăрти Шаљдунре йапонĕцсене хирĕҫ питĕ вăйлăн ҫапăҫаҫҫĕ. Вĕсен ĕнтĕ вунă пин ҫынна йахăн вилсе пĕтнĕ. Ҫакăн хыҫҫăн Йапони командованин Ҫуйчжоу ҫине тапăнса пырас плана ирĕксĕрех пăрахăҫа кăлармала пулнă.

Ҭаљцзин—Пукоу чукунҫулĕн кăнтăрти участкинче (центрти фронт) ҫĕнĕ ҫарсем йарса пулăшнă хыҫҫăн йапонĕцсем Бенпу ҫывăхĕнче Хуанхе йухаљшывĕн сула хăй ҫыранне каҫнă. Кунта йапонĕцсем малала урăх тапăнса пыман.

(ТАСС).